**А.А. Ядрицова, И.В. Ядранская, М.Г. Михуткина, Р.А. Мазикова**

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

**Вырăс шкулĕн**
**5-мĕш класĕ валли**

# Йышăннă паллăсем:

 — хăвăра тĕрĕслĕр (проверьте себя)

 — ыйтусемпе ĕçсем (вопросы и задания)

 — кăткăс ыйтусемпе ĕçсем (вопросы и задания повышенной сложности)

 — итлев-тăнлав (фонохрестоматия)

 — илемлĕ вулама хăнăхатпăр (учимся читать выразительно)

 — литература теорийĕ (теория литературы)

 — ӳнер тата сăмах тĕнчи (изобразительное искусство и литература)

 — культурăсен çыхăнăвĕ (диалог культур)

 — пултарулăх ĕçĕ (е проект) (творческое задание (или проект))

 — словарь ĕçĕ (словарная работа)

 — халăх ăс-хакăлĕ (народная мудрость)

**Чăваш литератури:** Вĕренӳпе вулав кĕнеки. 5-мĕш класс валли / А.А. Ядрицова, И.В. Ядранская, М.Г. Михуткина, Р.А. Мазикова çырса-пухса хатĕрленĕ. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2019. — … с.

Вĕренӳпе кĕнекине пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче усă курма Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ.

**Хисеплĕ юлташсем!**

Сире çĕнĕ вĕренӳ çулĕ ячĕпе саламлатпăр! Сирĕн алăра «Чăваш литератури» кĕнеке. Нумаях пулмасчĕ эсир вуланă сăввăн е калавăн тĕп шухăшне ăнланмасăр сăмахсене сыпăкăн çеç вулаттăр. Пĕчĕккĕн кĕнекепе туслашма та ĕлкĕртĕр ĕнтĕ.

«Чăваш литератури» пуян та нумай енлĕ. Ку кĕнеке сире чăваш халăхĕн авалхи мулĕпе, вăрттăнлăхĕпе паллаштарĕ, тĕрлĕ хайлавсене вуласа е итлесе тишкерме тата шухăшлама хăнăхтарĕ, чăваш чĕлхин пуянлăхне туйма вĕрентĕ.

Кăçалтан пуçламăш (1-4) классенче хайлавсене темăсем тăрăх вĕреннине вăтам (5-9) классенче малалла тăсăпăр, чăваш çыравçисем çырнă хайлавсемпе паллашăпăр. Кашни пысăк темăн ячĕ ваттисен сăмахĕсенчен пуçланать. Вăл урокра вĕреннĕ темăн шухăшне уççăнрах пĕтĕмлетме пулăшать.

Кĕнекепе еплерех усă курмаллине, ачасем, сирĕн лайăх пĕлмелле. Унта çĕнĕ ăнлавсем, тĕрлĕ ĕçсем пулĕç. Кĕнекери хайлавсене вуласа çыравçăсем хăйсен шухăшне тĕрлĕ мелпе çырса панине сăнăпăр, ăнланма тăрăшăпăр. Вуласа тухнă хыççăн ыйтусене хуравлама, хушнă ĕçсене пурнăçлама вĕренĕпĕр. Хайлавсене еплерех ăнланнине тĕрĕслеме «Ыйтусемпе ĕçсем», «Кăткăс ыйтусемпе ĕçсем», «Хăвăра тĕрĕслĕр» ĕçсем сĕннĕ.

Кашни хайлав вĕçĕнче «Словарь ĕçĕ» рубрика панă. Вĕсем пире хайлавсен содержанине лайăхрах ăнланма пулăшĕç.

«Илемлĕ вулама хăнăхатпăр» ушкăнри ĕçсем пире авторăн кăмăл-туйăмне уçса пама пулăшĕ, илемлĕ хайлавăн партитурине тума вĕрентĕ.

«Итлев-тăнлав» ушкăнри ĕçсем вара пире сăвва е юрра артист пек вулама е юрлама вĕрентĕ, илемлĕх тĕнчине туйма вĕрентĕ.

«Ӳнер тата сăмах тĕнчи» ушкăнри ĕçсем литературăна ытти ӳнерпе танлаштарма вĕрентет.

Кирек епле япалана та танлаштарура кăна хак пама пулать. Тăван (чăваш) литературине ытти халăх литературипе, культурипе танлаштарма май паракан ушкăнри ĕç — «Культурăсен çыхăнăвĕ».

«Пултарулăх ĕçĕ (е проект)» ушкăнри ĕçсем пирĕн пултарулăха тĕрлĕ енлĕ малалла аталантарма пулăшакан ĕçсенчен пĕри.

«Халăх ăс-хакăлĕ» ушкăнри ĕçсем тăван халăхăн çивĕч ăсĕ, шухăшлавĕ, чăваш чĕлхин ытарайми илемĕпе сăнарлăхне кăтартнисĕр пуçне пире çак пуянлăха туйма вĕрентĕ, ăнланма пулăшĕ.

Кĕнекене вулама ан хăрăр, ан ӳркенĕр. Кĕнекепе тĕрĕс ĕçлесен çеç эсир сăмах пĕлтерĕшне ăнланма, хитре шухăшлама, пуплеве пуянлатма пултаратăр.

Çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх пултăр сире, хаклă ачасем!

*Авторсем*

# ХАЛĂХ СĂМАХЛĂХĔ — УСТНОЕ НАРОДНОЕ ТВОРЧЕСТВО

## ВАТТИСЕН СĂМАХĔСЕМПЕ КАЛАРĂШСЕМ — ПОСЛОВИЦЫ И ПОГОВОРКИ

«Ваттисем калани вырăнлă», «Ваттисем каланине итле», — тенĕ ватă çынсем. Çакă пурнăçа лайăх пĕлекен ватăсем çамрăксене ăс парса тĕрĕс те йĕркеллĕ пурăнма хушнине пĕлтерет.

Ваттисен сăмахĕсемпе houларăшсем ĕлĕк-авалах пулса кайнă, паянхи куна çитнĕ. Вĕсенче тăван халăхăн çивĕч ăсĕ, шухăшлавĕ, чăваш чĕлхин ытарайми илемĕпе сăнарлăхĕ, витĕмлĕхĕ палăрать. Вырăнлă каланă ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем пирĕн пуплеве ÿкерчĕклĕ, сăнарлă тăваççĕ, вулаканăн е итлекенĕн асĕнче юлаççĕ.

**Пословица** — краткое мудрое изречение, содержащее законченную мысль.
**Ваттисен сăмахĕсем** — эteme пурнăçра кирлĕ ăслă шухăшсене пĕтĕмлетсе кĕскен каланă сăмахсем. Тĕслĕх: *«Ĕмĕр пурăн - ĕмĕр вĕрен», «Туссăр çын тымарсăр йывăç пек».*

Ваттисен сăмахĕсем кĕске те тарăн шухăшлă. Вĕсем — чăваш халăх сăмахлăхĕнче чи анлă сарăлнă хайлавсем. Ваттисен сăмахĕсем хăйсен тытăмĕпе, формипе — вĕçленнĕ предложенисем. Танлаштару — ваттисен сăмахĕсен тĕп паллисенчен пĕри. Ваттисен сăмахĕсем кĕске формăллă пулнăран илемлĕ янăраççĕ, шухăша вăйлатаççĕ. Ахальтен мар вĕсемпе çыравçăсем те хăйсен произведенийĕсенче анлă усă кураççĕ.

**Поговорка** — меткое, яркое народное выражение, часть суждения без вывода.
**Каларăшсем** — ăслă шухăшсене кĕскен, пĕтĕмлетÿ тумасăр каланă сăмахсем. Тĕслĕх: *«Пирĕн чÿречерен те хĕвел кĕрĕ», «Ĕмĕтĕн вĕçĕ-хĕрри те çук».*

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем — этеме пурнăçра кирлĕ ăслă шухăшсене пĕтĕмлетсе кĕскен каланă сăмахсем. Вĕсем пире ĕçе вĕренме, çынна хисеплеме, чăн-чăн çын пулма вĕрентеççĕ. Ваттисен сăмахĕсенчен каларăшсем уйрăлса тăраççĕ. Енчен те каларăш – пуплеве илемлетмелли мел (çеçке) пулсан, ваттисен сăмахĕ вара — тулли те пиçсе çитнĕ шухăшлав (çырла).

### Ваттисен сăмахĕсем

Алăра ĕç пултăр, пуçра ăс пултăр *(Руки работают, а голова кормит)*.
Ăсти епле, ĕçĕ те çапла *(Каков строитель, такова и обитель)*.
Виççĕри ывăл ача ашшĕне пулăштăр, виççĕри хĕр ача амăшне пулăштăр *(Пусть трехлетний помогает отцу, трехлетняя — матери)*.
Ĕç çынна илем кÿрет *(Труд красит человека)*.

Ĕçрен ан хăра — вăл хăй санран хăратăр *(Дело мастера боится).*
Ватă çынна хĕрхенмесен хăвна ватлăхра йывăр килĕ *(Не пожалеешь старого человека, самому в старости будет худо).*
Ватă çынтан ан кул — ху та ватă пулăн *(Не смейся над старым — сам будешь стар).*
Ватти вĕрентмесĕр çамрăка ăс кĕмест *(Пока старый не научит, молодой не научиться).*
Ват çын — тăват çын *(Старик, да лучше семерых молодых).*

Ача чух вĕренни ĕмĕрлĕх *(Ученье в молодости — на всю жизнь).*
Вĕренни çăкăр ыйтмасть *(Наука хлеба не просит, а сама хлеб даёт).*
Вĕренни — çутă, вĕренменни — тĕттĕм *(Ученье — свет, неученье — тьма).*
Пĕлĕве сутăн илеймĕн *(На деньги ума не купишь).*
Ĕмĕр пурăн — ĕмĕр вĕрен *(Век живи, век учись).*

Килекен çынна çăкăр лартма хушнă *(Путника положено накормить).*
Çăкăртан асли çук *(Хлеб — всему голова).*
Çăкăр хырăм хыççăн çӳремест *(Хлеб за брюхом не ходит).*
Çăкăр-тăвар хире-хирĕç *(Угощение должно быть взаимным).*
Çĕр улми — иккĕмĕш çăкăр *(Картофель — второй хлеб).*

Кайăк çуначĕсемпе вăйлă, çын — туслăхпа *(Птица сильна крыльями, а человек — дружбой).*
Туслăх ылтăнран хаклăрах *(Дружба да братство дороже всякого богатства).*
Туслăха укçалла илеймĕн *(Дружбу за деньги не купишь).*

Туссăр çын тымарсăр йывăç пек *(Человек без друзей, что дерево без корней).*
Çынпа çын туслă пултăр, халăхпа халăх туслă пултăр *(Пусть человек с человеком дружит, а народ — с народом).*
Тусу пулмасан — шыра, тупсан — упра *(Нет друга — ищи, а нашел — береги).*

Тăван çĕр-шыв — анне, ют çĕршыв — ама çури *(Родина — мать, чужбина —мачеха).*
Кашни кайăк хăй йăвине саватъ *(Каждый кулик своё болото хвалит).*
Тăван çĕр-шыв ăшши ĕмĕр тăршшĕ *(Тепло Родины всю жизнь).*
Тăван çĕр-шывран хакли нимĕн те çук *(Родина краше солнца, дороже золота).*

Вăрман — çур тăлăп *(Лес — половина тулупа).*
Кайăксем — çут çанталăк илемĕпе пуянлăхĕ *(Птицы — богатство природы).*

Пĕр йывăç касрăн — икĕ йывăç ларт *(Одно дерево срубишь — десять посади).*
Çăла ан сур *(Не плюй в колодец, пригодится воды напиться).*

## Каларăшсем

1. Вăрмантан туясăр ан кил *(Из лесу без палки не возвращайся).*
2. Ĕмĕт нихçан та каялла мар, малалла *(Надеемся на будущее и на лучшее).*
3. Илемлине илеççĕ, сăрăплине сутаççĕ *(Что красиво стараются купить, что с изъяном-продать).*
4. Пасарта аттепе-анне анчах çук *(На базаре все есть, кроме отца и матери).*
5. Пуян тесе ан мухтан, пуянлăх ларма килнĕ хăна пек *(Не кичись богатством, оно словно гость, прибывший на побывку).*
6. Пӳрт-çурт тытма тăн-пуç кирлĕ *(Чтобы управлять домашним хозяйством, нужен разум).*
7. Çынна сăпайлăх нар кӳрет *(Скромность украшает человека).*
8. Çынтан сахал илсе нумай пама тăрăш *(Бери у людей мало, отдавай много).*
9. Усламçă укçасăр пурăнаймасть, кăвакал — шывсăр *(Что утка без воды, то барин без денег).*
10. Шыв анаталла тапать, çын тăвалла тапаланать *(Вода вниз течет, а человек в гору карабкается).*



### Ыйтусемпе ĕçсем:

*Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем çинчен вуласа тухăр та ыйтусене хуравлăр:*

1. «Ваттисем калани вырăнлă», «Ваттисем каланине итле» тени мĕне пĕлтерет?
2. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем хăçан пулса кайнă?
3. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсен тĕп паллисенчен пĕри мĕн?
4. Çыравçăсем ваттисен сăмахĕсемпе усă кураççĕ-и?
5. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур?
6. Ваттисен сăмахĕсенче мĕн палăрать?



7. Ваттисен сăмахĕсем мĕн тума пулăшаççĕ?
8. Ваттисен сăмахĕсенчен ытларахăшĕ хăш пуплев пайĕпе пуçланаççĕ тата вĕçленеççĕ?



### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Панă ваттисен сăмахĕсене ушкăнлăр: «вĕренӳ», «çут çанталăк», «çăкăр», «туслăх», «Тăван çĕр-шыв», «ватă çын», «тус», «ĕç».
2. Ĕç çинчен, ватă çын çинчен, вĕренӳпе ăслăлăх çинчен, туслăх çинчен, тăван çĕр-шыв çинчен калакан хăш ваттисен сăмахĕсем сире килĕшрĕç?

3. Хăвăр пĕлекен ытти ваттисен сăмахĕсене аса илĕр, вĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр.

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Интернетпа усă курса ваттисен сăмахĕсенчен пĕрне тĕрлĕ чĕлхепе çырса кăтартăр (акăлчан, нимĕç, вырăс тата ыт.те). Ваттисен сăмахĕн пĕлтерĕшĕ улшăнчĕ-и?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Каларăшсен пĕлтерĕшне вырăсла уçса (куçарса) парăр. Вĕсемпе предложенисем йĕркелĕр.*

«Сăпса йăвине аллуна ан чик» — Не суй руку в осиное гнездо
«Ĕçлекен çыннăн пичĕ нар пек» — …
«Çут çанталăк çути пурне те çитет» — …
«Пушă пучах пуринчен çӳллĕ» — …

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупса палăртăр:*

… — ĕмĕр вĕрен.
… пĕрре кас.
… — ылтăнран хаклăрах.
… ырана ан хăвар.

## Пултарулăх ĕçĕ

Шкул пурнăçĕ çинчен пысăках мар калав çырăр. Ваттисен сăмахĕпе усă курса ят парăр.

## Проект

Ваттисен сăмахĕсене «чи лайăх пĕлекен» конкурс проектне çырса хатĕрлĕр.

# ПĔЛĔВЕ СУТĂН ИЛЕЙМĔН —
# ЗНАНИЕ ЗА ДЕНЬГИ НЕ КУПИШЬ

**Геннадий Волков**
**(1927-2010)**



***Геннадий Никандрович Волков*** *– чăваш халăхĕн тĕнчипе паллă ывăлĕ, педагогика наукисен докторĕ, профессор тата Раççей Педагогика наукисен академийĕсен академикĕ. Педагогика ăслăлăхĕнчи çĕнĕ юхăма – этнопедагогикăна – пуçарса яраканĕ. СССР Писателĕсен союзĕн членĕ. Ачасем валли вуншар калав çырнă, кĕнекесем пичетленĕ. Унăн хайлавĕсенче чăн пурнăç, ăса вĕрентни, сапăрлăх темисем паллă вырăн йышăнаççĕ.*

## ÇАМРĂКЛА ВĔРЕННИ — ЧУЛ ÇИНЧЕ
*Хайла*

Пĕр ватă çыннăн мăнукĕ шкула çӳренĕ. Çур çул та иртмен — вулама вĕреннĕ ку. Вара хăйĕн аслашшĕне тĕрлĕ кĕнекесем вуласа панă.

Аслашшĕн хăйĕн те вулама вĕренесси килсе кайнă. Мăнукĕ ăна кунсерен сас паллисем кăтартнă. Аслашшĕ хăшĕ-пĕрисене астунă, чылайăшне çавăнтах манса кайнă е пĕр-пĕринпе пăтраштарма пуçланă. Нумай вăхăт иртсен те хăйĕн мăнукĕ пек яка вулама вĕренсе çитеймен.

— Асатте, мĕнле-ха капла, — тĕлĕннĕ ача. — Эпĕ санран пĕчĕккĕ, çапах вулама та, çырма та вĕренсе çитрĕм. Эсĕ вара вулама та вĕренейместĕн.

— Эх, ачам, – тенĕ аслашшĕ салхуллăн. — Çамрăкла вĕренмесен ватăлла вĕренме хĕн çав. Мĕн вĕреннине мансах пыратăн. Пĕр хăлхаран кĕрет те тепринчен тухать. Чăн иккен: çамрăкла вĕренни — чул çинче, ватăлла вĕренни – юр çинче.

— Мĕне пĕлтерет ку, асатте?

— Ача чух тăрăшса вĕренмеллине пĕлтерет. Юра çил те вĕçтерет, сар хĕвел те ирĕлтерет. Чул çĕр çул хушши тĕрĕс-тĕкелех выртать.

**Словарь ĕçĕ**

мăнук — внук
салхуллăн — грустно
хĕн — мучение

**Притча** — небольшой рассказ, иносказание, в котором заключено религиозное или моральное поучение.

**Хайла (притча)** — ытарлă пĕлтерĕшлĕ вĕрентсе каланă кĕске калав.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Ватă çыннăн мăнукĕ ăçта çӳренĕ? Вăл мĕн хушăра вулама вĕреннĕ?
2. Мăнукĕ мĕнрен пит тĕлĕннĕ?
3. Аслашшĕ мăнукĕ пек яка вулама вĕренейнĕ-и? Кун пирки аслашшĕ мĕн каланă? Тупса вуласа парăр.
4. Халĕ вулама-çырма пĕлмен çынсем пур-и? Эсир ун пеккисене курнă-и?
5. Эсĕ малтан мĕн тума вĕреннĕ — вулама-и, çырма-и?
6. *«Çамрăкла вĕренни — чул çинче, ватăлла вĕренни — юр çинче»,* — тени мĕне пĕлтерет?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Ку хайлав мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.
2. Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн вулама-çырма çамрăкла вĕренмелле?

## Халăх ăс-хакăлĕ

Вĕренӳ çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене тупса çырса илĕр. Притчăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

Юлташусемпе пĕрле притчăна выляса кăтартăр.

**Вениамин Тимаков**
**(1940-2002)**



***Вениамин Петрович Тимаков*** *– чăваш çыравçи, тĕрлĕ кĕнекен авторĕ, филологи наукисен кандидачĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Вениамин Тимаков ачасем валли чылай сăвă-хайлав çырнă, кусару ĕçĕнче те чылай тăрăшнă. Унăн паллăрах кĕнекисем: «Аслă çыхăну» (Гармония), «Пурнăç тĕсĕсем» (Цвета жизни), «Сăмах илемне туйсан» (Волшебный мир поэзии), «Туссемпе тĕл пулсан» (Встреча с друзьями), «Хула хĕрринчи ыраш» (Рожь на окраине), «Юмансар» (Дубрава), «Чунри сукмаксем» (Тропинки души), «Упасарри» (Папортник) тата ыт.те.*

### КĔТНĔ ВĂХĂТ ÇИТРĔ

Кантăка, туссем, яр усăр:
Çĕнĕ кун тулта çиçет.
Çыру евĕр сарă çулçă
Урамра ирех вĕçет.

Хыпарлать вăл: «Эй, туссемĕр,
Пурте тухăр урама!
Шкул кĕтет сире, пĕлсемĕр,
Хам та пырăп ăсатма».

Урампа иртеççĕ шавлă
Çутă ĕмĕтлĕ туссем.
Кашниннех малашлăх паллă:
Ĕçлĕç, тăрăшĕç вĕсем.

Тăван шкул кил евĕр ăшă,
Алăкне уçса чĕнет:
«Хĕпĕртетĕп çамрăк йышшăн,
Иртĕр пурте, ларăр», — тет.

## Словарь ĕçĕ

**ăсат** — провожать
**малашлăх** — будущее
**хыпарла** — оповещать
**хĕпĕрте** — радоваться

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕнле вăхăт çитрĕ?
2. Сăвăç мĕнле куна «кĕтнĕ вăхăт» тесе палăртать?
3. Урамра мĕнле çулçăсем вĕçеççĕ?
4. Сарă çулçă ачасене мĕн хыпарлать?
5. Ачасем шкула мĕнле ĕмĕтпе çÿреççĕ?
6. Сăвăç пĕлÿ кунне мĕнле кăмăлпа çырать?
7. *«Кашниннех малашлăх паллă*:
   *Ĕçлĕç, тăрăшĕç вĕсем»*, — сăвă йĕркисене мĕнле ăнланатăр?
8. Сăввăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать-ши?

**Стихотворение** – это небольшое по объему произведение, созданное по законам стихотворной речи, выражающее душевное переживание.
**Сăвă** – ятарлă ритмпа палăрса тăракан текст.

## Пултарулăх ĕçĕ

1. Хăвăр шкулăрта пĕлÿ кунĕ мĕнле иртни çинчен каласа пама хатĕрленĕр.
2. Пĕлÿ кунĕ çинчен ÿкерчĕк хатĕрлĕр.
3. Çак сăвă патне пĕр-пĕр кĕвĕ (мелодия) тупса хатĕрлĕр. Ачасене, вĕрентекенсене итлеттерĕр. Эсир мĕншĕн çак кĕвве суйларăр? Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вырăсла куçарăр е тÿр килекен вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Вĕрентекен пур чухне вĕренсе юл.
2. Пĕлни пĕлменнинчен лайăхрах.
3. Аллупа ĕçле, пуçупа шухăшла.
4. Кайăк хитре тĕкĕпе, этем ырă ăсĕпе.
5. Ача чух вĕренни ĕмĕрлĕх.

# КĔРХИ ÇАНТАЛĂКĂН КĂМĂЛĔ ХУÇĂК — ОСЕНЬ – ПОГОДЫ ПЕРЕМЕН ВОСЕМЬ

**Трубина Мархви**
**(1888-1956)**



***Марфа Дмитриевна Трубина*** *– чăвашран тухнă малтанхи хĕрарăм çыравçăсенчен пĕри. Вăл нумай повесть, калав, юмах çырнă. Çыравçăн паллăрах повеçĕсем çаксем: «Ача чухнехи» (Детство), «Асăнмалăх, савăнмалăх» (На радость, на счастье), «Хÿтĕ вырăнта» (В укромном месте). Шкулта вĕрентекен пулса ĕçленĕ май çыравçă ача-пăча тĕнчине лайăх ăнланнă. Унăн хайлавĕсем ачасене ĕçчен пулма, чĕр чунсене, кайăк-кĕшĕке, выльăх-чĕрлĕхе, йывăç-курăка ăнланма, упрама вĕрентеççĕ.*

## КĔРХИ ÇАНТАЛĂК

*Калав*

Ылтăн кĕркунне çитрĕ. Уй-хир пушанчĕ. Янкăр тÿпере пĕлĕтсем шăваççĕ. Кăнтăрла хĕвел ялтăртатать, анчах та ун ăшши çуллахи пек мар. Ирсерен час-часах тăм ÿкет.

Мĕнле илемлĕ кĕркуннехи вăрманта! Йывăçсем хушшинче сарă, хĕрлĕ тум тăхăннисем курăнаççĕ. Ав унта сап-сарă вĕрене ларать, ăвăс та хĕрелнĕ, шĕшкĕ те хăмăрланнă. Паланпа улмуççи çулçисем те саралма пуçланă.

Сарăхнă, хĕрелнĕ çулçăсем тÿлек çанталăкра туратсем çинчен вĕлтĕртетсе вĕçсе анаççĕ. Вăрман кĕрхи çилпе кашлама тытăнсан çулçăсем темрен хăранă кайăксем пек пăлханаççĕ, вăрмантан вĕçсе тухаççĕ те хир тăрăх сапаланаççĕ. Вăрман майĕпен çаралать. Вĕçен кайăксем те таçта кайса кĕчĕç…

Шкул ачисем кĕрхи пахчара йывăçсем айне хусăклаççĕ, хăрăк туратсене иртеççĕ, чие тĕмĕсене сайралатаççĕ, хăмла çырлин кивĕ турачĕсене касса тирпейлеççĕ, хĕл каçма çыхса майлаштараççĕ, улмуççисемпе хурлăхан лартаççĕ. Вăрлăх валли хăварнă çимĕçсен вăррисене пухаççĕ.

### Словарь ĕçĕ

| | |
|---|---|
| **янкăр** — ясный | **хăрăк** — сухой |
| **хусăкла** — разрыхлять | **тăм** — заморозки |
| **вăрлăх** — семя | **пăлхан** — колыхать |

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. В. Лукиянов «Кĕрхи раща» картинипе паллашăр. Текстри хăш предложенисем картинăпа пĕр килеççĕ?
2. Ылтăн кĕркунне вăхăтĕнче хĕвел мĕнле пăхать?
3. Тӳпе мĕнле?
4. Кĕрхи вăрманта хăш йывăççем саралнă, хĕрелнĕ, хăмăрланнă?
5. Çиллĕ çанталăкра йывăç çулçисем мĕнле тăкăнаççĕ?
6. Тӳлек çанталăкра çулçăсем мĕнле ӳкеççĕ?
7. Кĕрхи вăрмана мĕнле сăн çапать?
8. Шкул ачисем пахчара мĕн ĕçлеççĕ?
9. Вĕçен кайăксем ăçта кайнă?
10. *«Кайăксем пăлханаççĕ»,* — тенине эсир мĕнле ăнланатăр? Мĕншĕн автор çулçăсене *«темрен хăранă кайăксем пек пăлханаççĕ»,* — тесе палăртать?



*Викентий Лукиянов «Кĕрхи раща»*

## Пултарулăх ĕçĕ

«Кĕркунне» сăмахпа синквейн тăвăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр.*

Вăрман чуна та, … те сиплет.
Вăрман … тăлăп.
Йывăç лартма часах та — уссине … часах мар.
Пĕр йывăç касрăн пулсан — … ларт теççĕ.

*Кирлĕ сăмахсем*: çур, вуннă, курма, ӳте.

**Иван Соколов-Микитов**
**(1892-1975)**



***Иван Сергеевич Соколов-Микитов*** *– вырăссен паллă çыравçи, калав ăсти. Унăн калавĕсем çут çанталăк, чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк синчен. Ашшĕ вăрманçă пулнă май мĕн ачаранпах Иван Соколов-Микитов вăрмана, çĕре юратса ӳснĕ. Çавăн пекех нумай çул çӳревре çӳренĕ, тĕрлĕ халăх литературипе кăсăкланнă. Унăн паллăрах хайлавĕсем: «Çулçă тăкăнăвĕ» (Листопадничек), «Çулталăк вăрманта» (Год в лесу), «Хĕллехи вăрман» (Зима в лесу), «Вăрман калавĕсем» (Лесные рассказы).*

## КĔРХИ ВĂРМАНТА

*Калав*

Авăн уйăхĕ пуçланчĕ. Шăрăх кунсем тăраççĕ. Çурла уйăхĕн ăшă кунĕсем хыççăн ылтăн кĕркунне çитрĕ.

Вăрман хĕррисенче тĕрлĕ кăмпа ӳсет: хĕрлĕ пуçлă хурăн кăмписем, симĕсрех, кĕренрех яка кăмпасем, яка кăрăççем, ырă шăршăллă хыр кăмписем. Сарлака ватă тункатасем çинче çинçе ураллă уплюнккасем пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнеççĕ.

Мăклă шурлăхсенче тĕмсем çийĕн хĕп-хĕрлĕ шур çырли шăрçасем пек сапаланнă. Вăрман уçланкинче хĕвел питтинче пилеш сапакисем хĕрелсе лараççĕ.

Сывлăш таса та уçă. Сасă инçете ян каять.

Вăрманти тăрă юхан шыв тĕпĕнчи кашни вак чул, кашни курăк туни курăнать.

Тăрă çӳллĕ тӳпере шухă, кăпăш пĕлĕтсем шăваççĕ. Уяр, ăшă кунсенче кайăксем кăнтăра вĕçсе кайма хатĕрленеççĕ. Чĕкеçсемпе çивĕч вĕршĕнсем вĕçсе кайнă та ĕнтĕ. Пăчăрсемпе карăшсем, хир чăххисем хĕл каçма пирĕн патах юлаççĕ. Шăнкăрчсем шавлă ушкăнсене пуçтарăнаççĕ. Вăрăм ураллă тăрнасем тăван шурлăхĕпе çуркуннеччен сывпуллашаççĕ.

**Рассказ** – небольшое эпическое произведение, повествующее об одном или нескольких событиях в жизни человека.

**Калав** тесе пурнăçра пулса иртнĕ пĕр-пĕр ĕçе сăнлакан, калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен пысăках мар илемлĕ литература хайлавне калаççĕ.

### ЫЙтусемпе ĕçсем:

1. Калаври хăш предложенисем Д. Репинăн «*Кĕркунне*» картинипе пĕр килеççĕ?
2. Калавра кĕркуннен хăш тапхăрĕнчи вăрмана сăнлать?

3.Ылтăн кĕркуннен мĕнле сăнĕсене ÿкернĕ? Каласа тухăр.
4.Кашни кăмпана автор мĕнле сăмахсемпе усă курса сăнланă?
5.Шур çырлисене мĕнпе танлаштарнă?
6.Мĕншĕн сасă инçете ян каять?
7.*«Уплюнккасем пĕр-пĕрин çине тĕршĕнеççĕ»,* — тенине мĕнле ăнланатăр?
8.Калава мĕншĕн «Кĕрхи вăрманта» тесе ят панă? Ăна урăх ят пама пулать-и? Пулать пулсан эсир мĕнле ят панă пулăттăр?
9. Калавăн тĕп шухăшĕ мĕнле тесе шутлатăр?



*Дмитрий Репин «Кĕркунне»*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Енчен те эсĕ ÿнерçĕ пулнă пулсан ылтăн кĕркуннене ÿкерсе кăтартма мĕн тĕслĕ сăрăсемпе усă курнă пулăттăн? Тĕссен ячĕсене каласа тух.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вырăсла куçарăр е тÿр килекен вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Кĕркунне çерçи те пуян.
2. Кĕр пуçтарать, хĕл салатать.
3. Кĕркунне — какай, çуркунне серте тутлă.
4. Кĕрхи пуян — хĕл ăшши.

## Проект

Ылтăн кĕркуннене сăнлакан калав çырăр е вуланă калав тăрăх ÿкерчĕк тăвăр.

# УСАЛ ĔÇПЕ ЫРĂ ЯТ ИЛЕЙМĔН —
# БЕЗ ДОБРЫХ ДЕЛ НЕ БУДЕТ И ДОБРОГО ИМЕНИ

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. «Çамрăкла вĕренни — чул çинче» хайлава (притчăна) кам çырнă?
2. *«Çамрăкла вĕренни — чул çинче, ватăлла вĕренни — юр çинче»,* — тени мĕне пĕлтерет?
3. Г.Н. Волков педагогика ăслăлăхĕнче мĕнле юхăм пуçарса янă?

## ЧИ ПЫСĂК ИНКЕК

*Хайла*

Мĕн-ши этемшĕн чи пысăк инкек?

Мĕн уншăн чи япăххи?

Алă çукки. Алăсăр пуртă та тытаймăн, ача та çĕклеймĕн.

Унтан начарри мĕн?

Урасăр пулни. Урасăр çул якине те пĕлеймĕн, сăрт çӳллĕшне те виçеймĕн.

Тата япăхраххи те пур-ши çыншăн?

Хăлхасăр юлни, илтейми пулни. Ĕçре савапа çава пĕр саслă пулнине те асăрхаймастăн.

Кунран начарри пулма пултарать-ши?

Куççăр юлни, курми пулни. Хăпартупа хĕвел пĕр тĕслине те пĕлейместĕн, çимĕç симĕсне те манатăн. Уйăх катăкĕпе пĕлĕт кăтри те ĕмĕрлĕхех сӳнеççĕ.

Кунран пысăкрах инкек те пур-ши тата?

Ăсран тайăлни – акă мĕн инкек. Çын утать те – çитеймест. Итлет те – ăнланмасть. Курать те – палламасть.

Ăсран тайăлнинчен хăрушши çук-тăр?

Пур çав. Юлхавлăх. Мĕншĕн наяна алă? Мĕншĕн ӳркенчĕке ура? Кахала ăс – мĕн тума?

Акă мĕн иккен чи пысăк инкек.

Юлхав ухмахран начар, тăмсайран япăх.

## Словарь ĕçĕ

**çӳллĕш** — высота
**сава** — рубанок
**çава** — коса
**уйăх катăкĕ** — убывание луны
**юлхавлăх** — лень

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Этемĕн пысăк инкекĕсене каласа тухăр, тетраде çырăр, вырăсла куçарăр.

2. Мĕн-ши этемĕн чи пысăк инкекĕ?
3. Паллă этнопедагог юлхавлăха мĕншĕн чи пысăк инкек тесе шутлать?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Ку хайлав мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Притчăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр:*

1. Ĕç тăрантарать, кахал пăсать.
2. Килекен çынна çăкăр лартма хушнă.
3. Ӳркенмен ăста пулнă.
4. Алăра ĕç пултăр, пуçра ăс пултăр.
5. Вăрман чуна та, ӳте те сиплет.

### ХЫТĂ ÇЫНПА КĔВĔÇ ÇЫН

*Чăваш халăх юмахĕ*

Пĕр пуян çын пурăннă. Вăл питĕ хытă пулнă, анчах та ăна пурпĕрех çитмен.

Пуян çынпа кӳршĕллĕ кĕвĕç çын пурăннă. Кĕвĕç çынна ним те кирлĕ пулман.

Пĕррехинче çаксене асамçă çапла калать:

— Сире мĕн кирлĕ – ыйтăр. Пурте пулать. Анчах та иксĕртен пĕри кăна ыйтăр. Пĕри мĕн чухлĕ ыйтать, теприне çавнах икĕ хут ытларах парăп.

Хытă çынни шухăшлать: «Кӳршĕ ыйттăр. Вăл хăйне валли мул ыйтать те, мана вара икĕ хут ытларах тивет».

Кĕвĕç çынни çав вăхăтра урăхла шухăшлать: «Эпĕ мĕн ыйтсан та кӳршĕн икĕ хут ытларах пулать. Ыйтам-ха эпĕ кӳрше савăнтармалла маррине». Кĕвĕç çын вара асамçăран хăйне хăрах куççăр хăварма ыйтать.

Çавăн пек пулса тухать те: кĕвĕç çын хăрах куççăр, хытă çын сĕм суккăр пулса юлать.

## Словарь ĕçĕ

**кĕвĕç** — завистливый
**кӳршĕ** — сосед
**суккăр** — слепой
**мул** — богатство
**асамçă** — волшебник

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Пуян çын мĕнле пулнă?
2. Пуян çынпа кӳршĕллĕ мĕнле çын пурăннă?
3. Пĕррехинче çаксене асамçă мĕн каланă?
4. Хытă çынна мĕн кирлĕ пулнă? Кĕвĕç çынна мĕн кирлĕ пулнă?
5. Кĕвĕç çын асамçăран мĕн ыйтнă?

6. Юлашкинчен мĕн пулса тухнă?
7. Сирĕн шутпа, хăш çынни япăхрах — хытă çынни е кĕвĕç çынни? Мĕншĕн?
8. Пурнăçра ун пек çынсем тĕл пулаççĕ-и?

**Народная сказка** — эта история или небылица, которую сочинили люди, народ. Такое повествование не имеет конкретного автора.

**Халăх юмахĕ** тесе эпир халăх хушшинче сăмах вĕççĕн çӳрекен, темиçе вариантлă, ламран лама куçса пыракан хайлавсене калатпăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Ку юмах мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Юмахăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр:*

1. Кĕвĕçекене кĕве çиет.
2. Сывлăх пулсан пурте пулать.
3. Çынна ан тирке, хăвна та тиркемĕç.
4. Ăс-тăна мĕн виличчен пухас пулать.
5. Пысăккине хапсăнакан пĕчĕккине çухатнă.
6. Хытă çыннăн пӳрнине кассан та юн тухмасть.

## Пултарулăх ĕçĕ

Ку юмаха эсир малалла мĕнле тăснă пулăттăр? Юмаха малалла тăсăр.

## Любовь Мартьянова
## (1950)



***Любовь Васильевна Мартьянова*** *— чăвашсен паллă поэчĕ, проза ăсти. Чăвашăн тарăн шухăш-кăмăлĕ, хăйне евĕрлĕ наци палăрăмĕ, чунри асамлăхĕ — унăн пултарулăхĕнчи тĕп темăсем. Любовь Васильевнăн сăввисемпе композиторсем юрăсем хывнă: «Чечек акрăм та» (Цветы посеяла), «Сарă çулçăсем» (Жёлтые листья), «Аса ил» (Вспомни) тата ыттисем те.*

*Унăн паллăрах кĕнекисем: «Эп чĕртнĕ вучах» (Пламень сердца моего), «Сенкер ачалăх» (Голубое детство).*

## ЯТСĂР ТРОЛЛЕЙБУС
*Калав*

Хула урамĕ тахçанах канăçлă ыйхăра. Юпасем çинчи электричество лампписемпе магазинсене илемлетсе тĕрлĕ тĕспе ялкăшакан çутăсем кăна хула

çĕрле те хăйĕн пурнăçĕпех пурăннине аса илтереççĕ. «Нумай юлмарĕ, пĕр сехет пек иртсен эпĕ те вырăна çитетĕп, — хашлатса илчĕ троллейбус. — Кам çӳретĕр ĕнтĕ çур çĕр тĕлĕнче, пурте килĕсенче, никамах та çук, пушăллах ярăнатăп ку вăхăтра.

Çапла, ĕмĕр тăршшĕпех вăл троллейбус кăна пулнă, номерсĕр пуçне унăн ячĕ те пулман. Чи кирли — юратать вăл хăй ĕçне. Çынсене ырă тунисĕр пуçне мĕн-мĕн кăна курмасть пулĕ вăл хула урамĕнче кунĕпе. Такама та паллать, чылайăшĕн кăмăлне те пĕлет.

«Чăнах, лайăх ман ĕç, кирлĕ ĕç», — татах ĕхлетсе илчĕ ватă троллейбус чарăнса тăмалли вырăна çитсен. Унччен те пулмарĕ — троллейбуса пиллĕкмĕш класра вĕренекен Кольăпа ашшĕ-амăшĕ кĕрсе тăчĕç. «Ăçта каять-ха ку ача çавăн пек çĕрле, — шухăшларĕ троллейбус, — тахçанах çывăрма вăхăт-çке ĕнтĕ унăн. Тепĕр тесен, ман ĕç мар», — тенĕн çилĕллĕн туртăнса илчĕ те вăл хăй çулĕпе васкарĕ....

— Юрататăп çĕрлехи хулана, икĕ-виçĕ уйăх пулаймарăм та кунта — тунсăхласах çитрĕм. Тăван хула тăван хулах çав. Троллейбусĕ тата… ах, епле аван, çутă, ăшă, пĕрре те сиктермест, юри пире çакăн пек лайăх илсе çӳрес тесе тăрăшнăнах туйăнать, — калаçрĕ вăл троллейбус чӳречинчен тинкернĕ май.

Троллейбус Коля амăшĕ хăй çинчен çавăн пек лайăх каланăшăн савăнса канăçлăн анаслаoriginal кăна илесшĕнччĕ, шăп çав самантра хыçалта пĕччен ларса пыракан Витя кĕсйинчен пĕчĕк пекĕ кăларса (ним тума аптранă енне пулĕ) ларкăч тирне тăрăнтарчĕ. «Мĕн турăм эпĕ сана? — кăшкăрса ярасшăнччĕ куна пачах кĕтмен троллейбус. Тĕлĕннипе, ыратнипе те ĕнтĕ, çитес çĕре çитмесĕрех вăхăтсăр тăп! чарăнчĕ те яланах савăнăçлă йăлкăшакан çутă куçне самантлăха сӳнтерчĕ. — Каймастăп урăх, çитет, — хашлатрĕ вăл алăксене уçнă май. — Çитет, тивĕçлĕ канăва каятăп. — Çак вăхăтра вăл хăйне çĕр çинче чи телейсĕр троллейбус пек туйрĕ. — Мĕн тăвас тетĕн, — калаçрĕ вăл хăйпе хăй, — эпĕ çын мар та, ыратмасть теççĕ пулĕ, тарăхмасть теççĕ пулĕ... Эпĕ çын мар çав, манăн номерсĕр пуçне ят та çуккă, хута кĕрекен те çуккă», — хашлатрĕ вăл нихăçан шухăшламан, нихăçан калама хăяйман сăмахсене çăта-çăта.

## Словарь ĕçĕ

**ыйхă** — сон
**анасла** — зевать
**çур çĕр** — полночь
**çилĕллĕн** — раздражать
**тивĕçлĕ кану** — заслуженный отдых
**хута кĕрекен** — заступник

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Хула урамĕ тăрăх пушăллах мĕн ярăнать?
2. Троллейбус хăйĕн ĕçне юратать-и?
3. Троллейбуса Коля амăшĕн сăмахĕсем мĕншĕн кăмăла кайрĕç?
4. Троллейбус мĕн пирки тивĕçлĕ канăва каясшăн? Çав вырăна тупса вуласа парăр.

Самаях тăчĕ-ши вăл çакăн пек, кĕçех салона походран килекен ачасен савăнăçлă ушкăнĕ кĕрсе тăчĕ. Ывăннă хăйсем, ĕшеннĕ, анчах кашнин куçĕнче хĕвел çиçет: кулаççĕ, тем çинчен хĕрсе кайса калаçаççĕ.

— Ан васкăр, часах каять вăл! — кăшкăрчĕ кăмăллăн малти ларкăч çине вырнаçса ларнă Саша. — Эпĕ яланах çак троллейбуспа çӳретĕп, нихăçан та пĕр минут та кая юлмасть вăл. Ку ман чи юратнă троллейбус. Пурте йĕркеллĕ пулать!

«Пулмасть, халичченхи пек пулмасть, каяймастăп эпĕ урăх, кӳрентерчĕç мана, — тесшĕнччĕ çав вăхăтра ятсăр, номерлĕ кăна троллейбус, анчах ачасен çиçсе тăракан куçĕсене асăрхасан ним калама аптраса тăчĕ. Тен, пурте пĕр пек мар, тен кусем лайăххскерсемех, — иккĕленчĕ вăл. — Каяс пулать, ывăннă вĕсем, ашшĕ-амăшĕ те кĕтсе хăшкăлчĕ пулĕ», — терĕ те троллейбус ерипен вырăнтан хускалчĕ.

Нумаях та кайманччĕ, хыçалта, Витя вырăнĕнче ларса пыракан ача тем кăшкăрса пурне те хăй патне пухăнма ыйтрĕ.

«Ах, тата мĕн тăваççĕ-ши?» — иккĕленсе шухăшларĕ троллейбус ачасен калаçăвне итлеме тăрăшса.

— Пĕлетĕп, Витя Егоровăн ку, акă курăр, çĕççи çине «Витя» тесе чĕрсе çырнă. Виçĕм кун кăтартрĕ вăл мана, хăй кăтартрĕ. Аслă пичче парнелерĕ терĕ. Апла… кăна та вăлах каснă, — пĕлтерчĕ тĕлĕннĕ ача ларкăч енне кăтартса, — çĕççи те тирĕнсех тăратчĕ. Манса хăварнă. Юлташ мар вăл маншăн урăх!

Темиçе минутран, тем канашланă хыççăн, ачасем пĕрин хыççăн тепри юлташĕсемпе сывпуллашса ана-ана юлчĕç. Юлашкинчен Сашăн та анма вăхăт çитрĕ.

— Юрĕ, — терĕ вăл хăйĕн чи юратнă троллейбусĕнчен тухсан, — каçар пире сана Витя пек усал ачасенчен упрайманшăн. Пур-ха ун пек услапсем. Хальлĕхе… Ыран вăл ларкăча хăех килсе тӳрлетĕ, кун пирки шантарсах калатăп. Урăх хăтлантармастпăр ăна кун пек…

Троллейбус майĕпен çаврăнса парк еннелле çул тытрĕ. Чăнах, мĕн-мĕн кăна курмасть пулĕ вăл кунĕпе.

«Çук, — шухăшларĕ хăй çапах, — иртерех-ха мана тивĕçлĕ канăва кайма, лайăх ĕç ман, кирлĕ ĕç. Витя пеккисемшĕн мар, чăн-чăн çынсемшĕн ĕçлесчĕ. Ятсăр пулсан та, номерлĕ кăна пулсан та, эпĕ çынсем хушшинче пурăнатăп, вĕсем мана кĕтеççĕ, эпĕ вĕсем патне васкатăп».

## Словарь ĕçĕ

**канашла** — советовать
**ларкăч** — сиденье
**шантарса кала** — обещать
**ĕшен (ывăн)** — уставать
**услап** — бездельник

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Салона походран килекен ачасен ушкăнĕ кĕрсе тăрсан троллейбусăн шухăшĕ улшăнчĕ-и? Мĕншĕн?

2. Витя выръненче ларса пыракан ача мĕн пирки юлташĕсене хăй патне чĕнсе илчĕ? Çак самантра троллейбусăн мĕнле иккĕленӳ шухăшĕ çуралчĕ?
3. Саша мĕншĕн троллейбусран каçару ыйтать? Вăл ăна мăн тума шантарать?
4. Троллейбус мĕншĕн тивĕçлĕ канăва кайма шутламасть?
5. Л. Мартьянова калавĕнчи сăнар чĕрĕ-и е чĕрĕ мар? Мĕнле хайлавсенче чĕрĕ мар япала е чĕрĕ чун сăнар пулма пултарать?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмах лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр. Калавăн содержанине палăртакан ваттисен сăмахне палăртăр*.

1. Ырă çын пуласси … паллă.
2. Ырă çынпа … кĕске.
3. Хушăн та, … кулян.
4. Ырă çынпа пĕтĕм тăван.

*Кирлĕ сăмахсем*: çыншăн та, ачаран, тĕнче, çул та.

## Пултарулăх ĕçĕ

Троллейбуса кам шутласа кăларнă-ши? Интернетран информаци тупăр. Чи интереслĕ фактсене çырса илĕр.

### Василий Сухомлинский
### (1918-1970)



***Василий Александрович Сухомлинский*** *— паллă педагог, çĕнетӳçĕ. Вăл хăйне евĕр педагогика юхăмне йĕркелекенĕ. Василий Сухомлинский ĕçĕсенче яланах ачасене тĕрĕс çул çине тăма пулăшасси, вĕсене тĕрлĕ енлĕн аталантарасси тĕп вырăн йышăнать.*

*Çавăн пекех унăн произведенийĕсенче ĕçпе юлхавлăх, ашшĕ-амăшĕпе ачисен проблемисем тĕп вырăнта. Василий Александрович шучĕпе ачасене тĕрĕс ӳстерме ĕç кăна пулăшать, ĕçе юратса тăвакан çын тӳрĕ чунлă та хастар пулать.*

### ЫРĂ ÇЫН
*Калав*

Типĕ çеçен хирте — çăл. Çăл сывăхĕнче пӳрт. Унта аслашшĕпе мăнукĕ пурăнаççĕ. Çăл патĕнче вĕрен сыхнă витре. Иртен-çӳренсем çăлтан шыв ĕçеççĕ, ачан аслашшĕне тав тăваççĕ.

Пĕррехинче вĕрен татăлса кайнă та витре tарăн çăла ÿкнĕ. Аслашшĕн урăх витре пулман. Аслашшĕпе мăнукĕ шыв та ĕçеймен.

Пĕр кун шывсăр пурăнаççĕ вĕсем, иккĕмĕш кун… Виççĕмĕш кун пĕр çын килсе тухрĕ. Асатте унăн витре пуррине асăрхарĕ. Хайхи çын малтан çăл çине пăхса илчĕ, унтан — аслашшĕпе мăнукĕ çине. Вара лашине çавăрчĕ те малалла кайрĕ.

— Мĕнле çын пулчĕ ку? — ыйтрĕ мăнукĕ аслашшĕнчен.

— Ку çын çынах мар, — хуравларĕ аслашшĕ.

Кăнтăрла тĕлне çăл патне тепĕр çын чарăнчĕ. Вăл урапи çинчен витре илчĕ, ăна вĕренпе çыхса шыв ăсрĕ. Аслашшĕпе мăнукне ĕçтерчĕ. Унтан витрине хăйăрпа çурĕ те хăйпе илсе кайрĕ.

— Ку çур çын кăна, — терĕ аслашшĕ.

Каç енне аслашшĕ çурчĕ умĕнче виççĕмĕш çын чарăнчĕ. Вăл урапи çинчен витре илчĕ, шыв ăсрĕ. Ĕçсе тăранчĕ те малалла кайрĕ. Витрине кунтах хăварчĕ.

— Ку тата мĕнле çын пулчĕ? — ыйтрĕ каллех мăнукĕ аслашшĕнчен.

— Чăн-чăн çын пулчĕ ку. Ырă çын. Ыттисене пулăшма хатĕр çын, — хуравларĕ аслашшĕ.

## Словарь ĕçĕ

**кăнтăрла** — полдень
**çăл (пусă)** — колодец
**хăйăр** — песок
**урапа** — телега

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕншĕн аслашшĕ малтанхи çынна çынах мар тет?
2. Мĕншĕн иккĕмĕшне вăл çур çын тет?
3. Мĕншĕн виççĕмĕш çыннине аслашшĕ чăн-чăн çын тесе калать?
4. *«Чăн-чăн çын»* тенине час-часах илтме пулать. Мĕне пĕлтерет-ши вăл?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Хăвăн е ытти çынсен пурнăçĕнче пулса иртнĕ пĕр-пĕр ырă ĕç çинчен çырса кăтартăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене çыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр:*

| | |
|---|---|
| 1. Ырă çынпа … | а. ачаран паллă. |
| 2. Кăмăллă çыншăн … | ă. çыншăн та кулян. |
| 3. Ырă çын пуласси … | б. пурте кăмăллă. |
| 4. Хушăн та, … | в. çул та кĕске. |

# ХĔЛ СИВВИ ВАТĂ ÇЫННА ТА ÇАМРĂКЛАТАТЬ — В ЗИМНИЙ ХОЛОД ВСЯКИЙ МОЛОД

## Николай Сандров
## (1922-1989)



***Николай Сандров (Николай Александрович Александров)*** *– чăваш поэчĕ, куçаруçă. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем юрăсем хывнă. Вĕсем хушшинче: «Ăçта каян, куккук» (Куда же ты, кукушка), «Санпа курса калаçмасан» (Если с тобой не поговорить), «Пахчи, пахчи, хăмла пахчи» тата ыттисем те. Çавăн пекех вăл Н. Чернышевский, З. Воскресенская, Т. Шевченко, Я. Купала, К. Хетагуров, М. Джалиль произведенийĕсене чăвашла куçарнă. Ачасем валли çырнă произведенийĕсенче çут çанталăк теми паллă вырăн йышăнать: «Тул çутăлать» (Рассвет), «Пилĕк çăл таппи» (Пять родников), «Ăрша вылять» (Зреют нивы), «Таса тӳпе» (Чистое небо).*

## ПĔРРЕМĔШ ЮР

Юр çăвать, пĕрремĕш юр…
Юр çăвать, тухса эс кур…
Ут эс тӳрĕ урампа,
Юр пĕрчи вылять санпа:
Пит çине ачаш ӳкет,
Кăтăклать те ирĕлет.

Юр çăвать, пĕрремĕш юр…
Сахăр пек таса, шап-шур.
Кăмăла çĕклентерет,
Йăпатать те илĕртет.
Ман çӳрес килет каçчен
Нăтăрт-нăтăрт юр çинче.

### Словарь ĕçĕ

**кăтăкла** — щекотать
**кăмăла çĕклентер** — поднять настроение
**йăпат** — успокаивать
**илĕрт** — манить

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Пĕрремĕш юра автор мĕнпе танлаштартать?
2. Пĕрремĕш юр çынсен кăмăлне мĕншĕн çĕклентерет?
3. Эсĕ пĕрремĕш юр çунине асăрханă-и?
4. Пĕрремĕш юр мĕнле туйăм çуратать?

### Хăвăра тĕрĕслĕр

С. Жуковскийăн «Пĕрремĕш юр çурĕ» картинине сăмахпа «ӳкерсе» парăр.

## Илемлӗ вулама хӑнӑхатпӑр

Сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренӗр. Пӗрремӗш юрӑн «асамлӑ ӳкерчӗкне» сӑвӑҫӑ епле кӑтартнӑ, ҫавӑн пек вуласа пама тӑрӑшӑр.

**Сравнение** – изображение одного явления с помощью сопоставления его с другим.

**Олицетворение** – придание неживому предмету свойств живого существа.

**Танлаштару** – пӗр япалана куҫ умне тӳрех тухса тӑраканнипе танлаштарни *(пичеке пек, кайӑк сасси евӗрлӗ).*

**Олицетворени (сӑпатлантару)** – ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсене, таврари япаласене, йывӑҫ-курӑка, выльӑх-чӗрлӗхе этем пек чӗрӗ чунлӑ туса сӑнлани *(юман ҫилпе тавлашать, ҫил ачисем чупкаласҫӗ).*

## Итлев-тӑнлав

«Пахчи, пахчи, хӑмла пахчи» юррӑн авторӗсенчен пӗри — Николай Сандров. Ҫак юрра итлӗр. Юрӑ мӗнле туйӑм ҫуратрӗ?

## Проект

Юр пӗрчи касса кӑларса ун ҫинчен юмах ҫырӑр. Кӗнекери картинӑпа усӑ курӑр.



*Станислав Жуковский «Пӗрремӗш юр ҫурӗ»*

## Альберт Канаш
## (1928-1968)



***Альберт Канаш (Альберт Георгиевич Кожанов)*** – *чăвашсен паллă сăвăçи. Чирпе хуçăлнă пулин те вăл чăваш халăхне чылай сăвă парнеленĕ. Сăввисенче яланхи пекех çамрăклăх, юрату хĕмленнĕ, ĕмĕтсем çунатланнă, малашлăх пăшăрхантарнă.*

*Пичетленсе тухнă кĕнекисем: «Сăвăсем» (Стихи), «Иккĕмĕш утăм» (Второй шаг), «Шăпчăксем, эп сире итлесе...» (Соловьи, слушая вас...).*

### ЙĔЛТĔРПЕ

Çиччĕрех вăрантăм, пăхрăм кантăкран:
Мĕн тери тӳлек те лайăх кун паян.
Мамăк пек çемçе юр çунă-мĕн çĕрле,
Йĕрсĕрех чупать ав пирĕн сар вĕшле.
Тăтăм та зарядка турăм тăрăшса,
Шăл тасатрăм, çурăм пит-куçа таса…
Тăхăнтăм-тумлантăм эпĕ çăмăлах,
Уçăлма каям-ха терĕм уялла.
Йăтса тухрăм, сыртăм вĕр çĕн йĕлтĕре,
Савăк туйăмпа çеç ыткăнтăм хире!



### Словарь ĕçĕ

**тӳлек** — спокойный
**вĕшле (йытă)** — собака
**тумлан** — одеваться
**мамăк** — пух
**йĕр** — след
**сыр** — надевать (лыжи)

### Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлĕ вулама вĕренĕр.

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăри сăнар миçере вăраннă?
2. Çанталăк мĕнле пулнă?
3. Çĕрле мĕнле юр çунă?
4. Сăвăри сăнар мĕн-мĕн тунă?
5. Вăл йĕлтĕрпе ăçта кайнă?
6. Эсир йĕлтĕрпе ярăнатăр-и? Ăçта ярăнатăр?
7. *«Йĕрсĕрех чупать ав пирĕн сар вĕшле»,* — тенине мĕнле ăнланатăр?

### Пултарулăх ĕçĕ

Ӳкерчĕк тăрăх калав тăвăр.

# ÇУТ ÇАНТАЛĂК – ПИРĔН ТĂВАН КИЛ —
# ПРИРОДА – НАШ ДОМ

## Александр Артемьев
## (1924-1988)



***Александр Спиридонович Артемьев*** *хăйĕн пултарулăх çулне поэзинчен пуçланă. Унăн сăввисемпе юрăсем хайланă: «Ах, пĕлесчĕ» (Ах, знать бы), «Çуралнă çĕр-шыв» (Родимая сторона), «Салампи юрри» (Песнь Салампи) и другие. Куçаруçă ĕçĕнче те вăй хунă: А. Пушкин, М. Лермонтов, И. Тургенев, Л. Толстой, И. Гёте хайлавĕсене чăвашла куçарнă. А.Артемьевăн чи паллă произведенийĕсем: «Ан авăн, шĕшкĕ» (Не гнись, орешник), «Салампи» (Саламби), «Улма йывăç авăнать» (Яблоня гнется) тата ыт. те.*

## ТĂВАН ТАВРАЛĂХ
*Калав*

Поезд Сăр кĕперĕ урлă каçать те Чăваш çĕр-шывне ыткăнса кĕрет. Актаев тамбура тухрĕ те шухăша кайрĕ. Кантăк витĕр тăван уйсем, рашчасем, уçланкăсем çине ытарайми пăхрĕ.

Акă çуралнă çĕр-шывăм. Çул хĕррипе тĕрлĕ йывăçсем ӳсеççĕ: шурă хурăнсем, яштака хырсем, лаштра юмансем, лăпсăркка çăкасем, лутра шĕшкĕлĕх. Инçетри-инçетри ялсем курăнаççĕ. Юр кайса пĕтнĕпе пĕрех ĕнтĕ. Çырма-çатра çеç палăркалать. Умра тăван ялăм, килĕм-йышăм, тусăм-тантăшăм.

Пăравус хаваслăн кăшкăртса ячĕ, Актаевăн шухăшĕсене сирчĕ. Умри станци курăнса кайрĕ. Акă вокзал, тырă склачĕсем, чукун çул çинче ĕçлекенсен пĕр хутлă вăрăм çурчĕсем — пурте вĕсем ачаран палланă çуртсем.

### Словарь ĕçĕ

**Сăр** — Сура  
**кĕпер** — мост  
**уçланкă** — поляна  
**лутра шĕшкĕлĕх** — низкорослый орешник

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Çуралнă çĕр-шыв мĕншĕн паха-ши?
2. Текстран йывăç ячĕсене çырса илĕр. Хăш йывăçĕ чăваша çывăх, хăшĕ — вырăс çыннине? Мĕншĕн?

### Пултарулăх ĕçĕ

Хăш çĕр-шывсенче йывăççем символ шутланаççĕ? 5 тĕслĕх çырăр. Чăваш халăхĕн юратнă йывăçĕ пур-ши?

## Ӳнер тата сăмах тĕнчи

Вуланă калавăн ӳкерчĕкне тăвăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене çыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр. Калавăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр:*

1. Юхман шыв …
2. Тăван кĕтес хăй …
3. Çут çанталăк — …
4. Таса çăлра — …
5. Тăван çĕр-шыв ăшши …

а. пирĕн тăван кил.
ă. таса шыв.
б. час вараланать.
в. ĕмĕр тăршшĕ.
г. патнех туртать.

**Алексей Афанасьев**
**(1925-1985)**



***Алексей Андриянович Афанасьев*** *– илемлĕ сăмах ăсти, поэт, куçаруçă. Чăвашсен паллă поэмине, К. Ивановăн «Нарспине», П. Осиповăн «Айтарне», А. Алкан «Шыварманне» удмуртла куçарнă. 20 ытла кĕнеке авторĕ.*

*Паллă кĕнекисем: «Пирĕн интернат» (Наш интернат), «Сăвăсем» (Стихи), «Çурхи аслати» (Весенний гром), «Çунатлă çамрăклăх» (Крылатая молодость), «Юманлăх çулçă тăкмарĕ» (Дубы не сбросили листья).*

## ТĔНЧЕ ХИТРЕ

Мĕнешкел тĕнче хитре!
Ирĕклĕ тавралăх вĕççĕр…
Шĕвĕ сĕт пек тӳпере
Тăрăлсан ирхи тĕтре,
Кайăксем юрлаччăр, вĕçчĕр!

Шур кăмпаллă вăрманта
Шурă хурăнсем шавлаччăр.
Выртмалла килсен утта,
Ырă вырăн пур унта –
Мамăк курăк, симĕс чатăр…

Мĕнешкел тĕнче хитре!
Ăшăнса çыврать ав ту-сăрт.
Сăпкари пек уй-хире
Çил ачашшăн сиктерет, -
Чупăрах, хумсемĕр, чупăр!

Хамăр ял çине пăхсан,
Савăнса тапать чĕреçĕм.
Ман тĕнчеçĕм чи малтан
Пуçланать тăван ялтан –
Çавăнпа тĕнче хитре-шим?

## Словарь ĕçĕ

**шĕвĕ** — жидкий
**хум** — волна
**чатăр** — шатер
**мамăк** — пух

**шавла** — шуметь
**сăпка** — колыбель
**чĕре** — сердце

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Тĕнче мĕншĕн хитре? Сăвă йĕркисемпе усă курса каласа тухăр.
2. Сăввăн тĕп шухăшĕ мĕнле тесе шутлатăр?
3. Сăвăра темиçе хут *«Мĕнешкел тĕнче хитре!»* кăшкăрулла предложенипе усă курни мĕн тума кирлĕ? Ку сăвăра савăнăç е тунсăх ытларах?
4. Сăвăри эпитетсене тупса палăртăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Сирĕн шутпа, ачасем, мĕншĕн тĕнче хитре? Кĕске сăнлав евĕр текст çырăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсен тӳр килĕвĕсене тупăр. Сăвă содержанипе çыхăннă ваттисен сăмахне палăртăр.*

1. Этем — çут çанталăк ачи.
2. Çут çанталăкра кашни вăхăтăн хăйĕн илемĕ.
3. Çут çанталăк — пирĕн тăван кил.
4. Пĕр йывăç касрăн — икĕ йывăçларт.
5. Шыв — çут çанталăк пурлăхĕ.

а. Одно дерево срубишь — десять посади.
ă. Человек — дитя природы.
б. Вода — богатство природы.
в. Природа — наш дом.
г. У природы нет плохой погоды.

## Пултарулăх ĕçĕ

Тĕнче илемне хăвăр ӳкерчĕкре палăртăр.



**Михаил Пришвин**
**(1873-1954)**

***Михаил Михайлович Пришвин*** *– вырăссен паллă çыравçи, сăнарлă сăмах ăсти. Унăн произведенийĕсенче çут çанталăка, пур чĕр чуна, кайăк-кĕшĕке «чĕрĕ» пек туса кăтартасси, илемлĕхе туйма вĕрентесси тĕп темăсем шутланаççĕ. Çыравçă хăй те çул çӳреме юратнă май вулакансене çут çанталăка сăнама, туйма, тăван çĕре юратма, хисеплеме вĕрентет.*

## ЫЛТĂН ÇАРАН

*Калав сыпăкĕ*

Пурӑнасса эпир ялта пурӑнатпӑр. Пирӗн пӳрт умӗнчех ҫаран сарӑлса выртать. Кукша пуҫ чечеке ларнӑ вӑхӑтра ҫаран сап-сарӑ курӑнать. Тӗлӗнмелле илемлӗ вара! Пурте питӗ илемлӗ! Ҫаранӗ вара — ылтӑн!

Пӗррехинче эпӗ ирех пулла кайрӑм та ҫаран ылтӑн тӗслӗ мар, симӗс пулнине асӑрхарӑм. Анчах кӑнтӑрла умӗн, киле таврӑннӑ чухне, ҫаран каллех ылтӑн тӗслӗ йӑлтӑртатса тӑрать. Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ сӑнама тытӑнтӑм. Каҫалапа ҫаран каллех симӗс тум тӑхӑнчӗ. Мӗнле япала ку тесе ҫаран ҫине кайрӑм та кукша пуҫ чечекне шыраса тупрӑм. Мӗн куртӑм-ха эпӗ? Кукша пуҫ хӑйӗн сарӑ ҫеҫкисене эпир пӳрнесене хутлатса алла чӑмӑртанӑ пек ҫӗре хупласа хунӑ та, сарӑ чечекӗсем пӗртте курӑнмаҫҫӗ. Ирхине хӗвел тухсан кукша пуҫ чечекӗсем уҫӑлса, сарӑлса каяҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫаран ылтӑн тӗслӗ пулса тӑрать иккен. Ҫав вӑхӑтран пуҫласа кукша пуҫ пирӗншӗн тӗлӗнмелле чечек пулса тӑчӗ, мӗншӗн тесен кукша пуҫсем пирӗнпе пӗр вӑхӑтра ҫывӑрма выртаҫҫӗ, пирӗнпе пӗрле ҫывӑрса тӑраҫҫӗ.

## Словарь ӗҫӗ

**ҫаран** — луг
**пӳрнесене хутлат** — складывать (пальцы)
**кукша пуҫ** — одуванчик
**кӑнтӑрла умӗн** — до обеда

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Калаври сӑнар ӑҫта пурӑнать?
2. Калава мӗншӗн «Ылтӑн ҫаран» тесе ят панӑ?
3. Ҫыравҫӑ ача мӗнле кӑткӑс та интереслӗ тӗпчев туни (открытие) ҫинчен каласа парать? Ҫав вырӑна тепӗр хут тупса вуласа парӑр.
4. Хӑйӗн сарӑ ҫеҫкисене хутлатнӑ кукша пуҫа автор мӗнпе танлаштарать?
5. Эсӗ кукша пуҫ чечеке курнӑ-и? Вӑл мӗн тӗслӗ?
6. Кукша пуҫ ӳсекен ҫаран мӗн тӗслӗ курӑнать?
7. Эсӗ кукша пуҫӗнчен пуҫ кӑшӑлӗ туса курнӑ-и?
8. Ирхине тата каҫхине кукша пуҫ ӳсекен ҫаран мӗншӗн симӗс сӑнлӑ?

## Халӑх ӑс-хакӑлӗ

*Ваттисен сӑмахӗсен пуҫламӑш пайне тупӑр. Калавӑн тӗп шухӑшӗпе тӳр килекен ваттисен сӑмахне палӑртӑр:*

… — ҫут ҫанталӑк пурлӑхӗ.
… икӗ йывӑҫ ларт.
… таса шыв.
… пирӗн тӑван кил.

## Пултарулӑх ӗҫӗ

Кукша пуҫ ҫинчен интернетран 5 факт ҫырса илӗр.

# ÇĂКĂРТАН АСЛИ ÇУК – ХЛЕБ – ВСЕМУ ГОЛОВА



**Иван Яковлев**
**(1848-1930)**

***Иван Яковлевич Яковлев*** *– чăвашсен паллă просветителĕ, чăваш алфавитне тăваканĕ. Мĕн ĕмĕр тăршшĕпех чăваш халăхне çутта кăларас тесе вăй хунă, шкулсем уçнă, чăваш ачисем валли тĕрлĕ юмах-халап пухнă, вĕсене илемлетсе халăх патне çитернĕ. Унăн кĕске калавĕсем тарăн шухăшлă, ăса, пурнăçа вĕрентекен хайлавсем.*

## КУЛАЧĂ
*Юмах*

Пĕр ачан питĕ кулачă çиесси килнĕ тет. Ашшĕнчен пасара каймассерен кулачă илсе килме ыйтнă тет. Пĕрре пасар кунĕ ашшĕ çакна хутаçа çăкăр чиктерет те кăк кăклама илсе каять тет.

— Акă, ачам, çак кăксене кăкла, çăкăрна пĕртте ан пăх, вăл хăех кулачă пулса выртать, — тесе каларĕ те пасара кайрĕ тет.

Ача кăклать-кăклать те çăкăрне пырса пăхать — çăкăрĕ кулачă пулман тет. Пăртак тăрсан татах пăхать тет, татах пулман. Каç та пулать. Ачан хырăмĕ тем пек выçса кайрĕ тет. Касать те çăкăра тăвар сапса çиет тет.

— Çăкăр кулачă пулчĕ-и, ывăлăм? — ыйтрĕ тет ашшĕ пасартан таврăнсан.

— Тĕсĕ кулачă тĕслĕ мар та, тути кулачăран та аван, — тесе каларĕ тет ача.

— Çапла çав, ачам, ĕçлесе çисен çăкăр та тутлă, тăрансан пыл та йÿçĕ, — терĕ тет ашшĕ.

### Словарь ĕçĕ

**кулачă** — калач (белый хлеб)
**пасар** — рынок, базар
**йÿçĕ** — горький
**кăк (тымар)** — корень
**сап** — сыпать
**кăкла** — корчевать

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Ачан мĕн çиесси килнĕ?
2. Ашшĕ ăна ăçта илсе кайнă?
3. Ача хăçан апат çиме ларнă?
4. Хура çăкăр ачана мĕншĕн кулачăран та тутлă пек туйăннă?
5. Юмахра мĕнле ытарлă калани пур? Тупса вулăр.
6. Эсир Иван Яковлевăн тата мĕнле калавĕсене пĕлетĕр?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсен тӳр килĕвĕсене тупăр.*

1. Çăкăр хырăм хыççăн çӳремест.
2. Килекен çынна çăкăр лартма хушнă.
3. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç.
4. Çăкăртан асли çук.
5. Çĕр улми — иккĕмĕш çăкăр.

1. Путника положено накормить.
2. Угощение должно быть взаимным.
3. Хлеб — всему голова.
4. Хлеб за брюхом не ходит.
5. Картофель — второй хлеб.

**Содержание** - то, о чем повествуется в произведении, а **форма** – как это делается, какие художественные средства используются.

**Содержани** — хайлавра мĕн калани. **Форма** — илемлĕ хайлавăн тытăмĕ, сăн-сăпачĕ, тулаш енĕ.

**Илпек Микулайĕ**
**(1915-1981)**



***Илпек Микулайĕ (Ильбеков Николай Филиппович)*** *— чăвашсен паллă çыравçи, очерк ăсти, куçаруçă, 20 ытла кĕнеке авторĕ. Çыравçă хăйĕн произведенийĕсенче хресчен пурнăçне, вĕсен йăли-йĕркине, шухăш-кăмăлне сăнланă. Халăх хушшинче ытларах ăна «Хура çăкăр» (Чёрный хлеб) роман тăрăх пĕлеççĕ. Унăн хайлавĕсем психологилле сăнарсемпе, философилле шухăш-кăмăлпа пуян.*

## ÇĂКĂР ТĔПРЕНЧĔКĔ

*Калав*

Пирĕн çемье пысăк: асаттепе асанне, аттепе анне, пичче, Ванюк шăллăм. Пĕррехинче çемьепе апата лартăмăр. Пурте тирпейлĕ пулма тăрăшатпăр. Ванюк шăллăм çес тăп ларма пĕлмест. Вăл стаканри сĕте тăкнă, çăкăрне тĕпретнĕ. Акă пĕр пĕчĕк çăкăр татăкне урайне ӳкерчĕ. Çакна асанне курчĕ те татăка çавăнтах пĕшкĕнсе илчĕ. Атте Ванюк çине кăмăлсăррăн пăхрĕ.

— Эсĕ, Ванюк, тирпейлĕрех пул-ха. Çăкăра ун пек ан тĕпрет. Çăкăр пĕрчĕрен пулать. Çăкăр тăвасшăн миçе çын тăрăшса ĕçлет. Суха тăваççĕ, акаççĕ, выраççĕ, авăртаççĕ, пĕçереççĕ. Çăкăра хисеплемен çын ĕçе те хисеплемест. Ун пек ан пул.

Ванюк вăтанса хĕрелсе кайрĕ. Вăл васкасах сĕтел çинчи тĕпренчĕксене пуçтарчĕ. Атте савăнчĕ. «Яланах тирпейлĕ пул», — терĕ.

## Словарь ĕçĕ

**пĕррехинче** — однажды
**тĕпрет** — накрошить
**тăп** — смирно
**тирпейлĕ** — аккуратный

## ЫӀйтусемпе ĕçсем:

1. Ванюксен çемйинче миçе çын?
2. Ванюк хăйне сĕтел хушшинче мĕнле тыткаланă? Вăл урайне мĕн ӳкернĕ?
3. Ашшĕ Ванюк çине мĕншĕн кăмăлсăррăн пăхнă?
4. Çăкăр çинчен ашшĕ Ванюка мĕн каланă? Тупса вулăр.
5. Ванюк ашшĕ сăмахне ăнланнă-и? Çакă мĕнре курăнать?
6. Сирĕн çемьере çăкăра тирпейлĕ тытаççĕ-и?

## Пултарулăх ĕçĕ

*Çак глаголсене йĕркипе вырнаçтар (расположите действия по порядку «Путь от зерна до буханки хлеба»)*

Сӳрелеççĕ, акаççĕ, çитĕнтереççĕ, авăртаççĕ, пĕçереççĕ, сухалаççĕ, выраççĕ, çăраççĕ.

## Халăх ăс-хакăлĕ

Çăкăр çинчен калакан мĕнле ваттисен сăмахĕсем пĕлетĕр? Тупса çырса илĕр. Калавăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр.

**Петĕр Эйзин**
**(1943)**



***Петĕр Эйзин (Петр Егорович Димитриев)*** – *чăвашсен паллă сăвăçи, куçаруçă, чăваш литературине çĕнĕ юхăм, çĕнĕ варкăш – ирĕклĕ сăвă-шыравĕ – кĕртекенсенчен пĕри. Тăван кил ăшши, атте-анне юратăвĕ, пехилĕ, çут çанталăкăн илемĕ – çак темăсем тĕпре унăн произведенийĕсенче. Паллăрах хайлавĕсем: «Кăвайт» (Костёр), «Сар хĕвел» (Красно солнышко), «Çĕмĕрт çути» (Цвет черёмухи), «Анне пехилĕ» (Материнский завет), «Юлашки çил-тăман» (Последняя вьюга).*

**ÇĂКĂР**

Хырăм выçмасăр
Çăкăр ан тыт:
Çăкăртан хакли çук.

Алă çумасăр
Çăкăр ан тыт:
Çăкăртан таси çук.



Çĕлĕк хывмасăр
Çăкăр ан тыт:
Çăкăртан асли çук.

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлĕ вулама вĕренĕр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Çăкăра мĕншĕн хырăм выçмасăр, алă çумасăр, çĕлĕк хывмасăр тытма хушман?
2. *«Çăкăртан асли çук»,* — тенине вырăссем мĕнле калаççĕ-ши?

## Пултарулăх ĕçĕ

Шупашкар хулинче кăларакан çăкăр ячĕсене чăвашла та, вырăсла та çырса тух.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупăр:*

… хыççăн çӳремест.
… асли çук.
… çăкăр лартма хушнă.
… хире-хирĕç.

### **Порфирий Афанасьев**
### **(1942)**



***Порфирий Васильевич Афанасьев*** *— тăван литературăна юратакан кашни вулаканшăн паллă ят. Çыравçă поэзи, проза, драматурги жанрĕсенче ăнăçлă ĕçлет. Тăван çĕр-шыв теми унăн произведенийĕсенче тĕп тема пулса тăрать. Паллăрах кĕнекисем: «Сан ятупа» (Именем твоим), «Хĕвел хапхи» (Солнечные врата), «Тав» (Благодарение), «Çарăмсан кĕввисем» (Черемшанские напевы).*

### **ПĔРЧĔ**

Мухтав сана, пĕрчĕ,
Эс пурнăç хăвах.
Эс шăтăн, эс ĕрчĕн,
Кĕттермĕн вăрах.

Ем-ешĕллĕн тухăн
Сурхи тĕнчерен,
Е ăшă, е сивĕ
Эс ыйтăн куллен.

Çĕкленĕн патваррăн
Çӳлтен те çӳле.

Çапла пуç кăларăн
Çу çитнĕ тĕле.

## Словарь ĕçĕ

**пĕрчĕ** — зернышко
**ешĕл** — 1) зеленый; 2) цветущий
**шăт** — прорастать, всходить
**патвар** — мощный, крепкий

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Пĕрче автор мĕншĕн: «Эс пурнăç», — тесе палăртать?
2. Эсир П.Эйзинăн «Çăкăр» тата П.Афанасьевăн «Пĕрчĕ» сăввисене вуласа тухрăр. Çак сăвăсенчен хăшне сирĕн пăхмасăр вĕренес килет?

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

П.Эйзин çырнă «Çăкăр» е П.Афанасьев çырнă «Пĕрчĕ» сăвăсенчен пĕрне пăхмасăр калама вĕренĕр. Сăввăн партитурине тăвăр. Автор каланине тĕрĕс уçса пама тăрăшăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*1. Пană сăмахсенчен ваттисен сăмахĕ пуçтарăр.*
Хура, пекех, кулачă, çăкăр та, тутлă, выçсан.

*2. Çăкăр çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене аса илĕр.*

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Ытти халăх çыравçисен «Çăкăр» темăпа çырнă сăввисене интернетра тупăр, пĕр-пĕр сăввине çырса илĕр, сăввăн темине тата тĕп сăнарне палăртăр.

# ĔÇ ÇЫННА ИЛЕМ КӲРЕТ – ТРУД КРАСИТ ЧЕЛОВЕКА

**Геннадий Мальцев**
**(1929-1991)**



***Геннадий Степанович Мальцев*** *– чăвашсен паллă сăвăçи. 1960-мĕш çултанпа пичетлenme пуçланă. Сăвăсемсĕр пуçне кулăшла калавсем, статьясемпе очерксем çырнă. Ун хăш-пĕр сăввисемпе композиторсем юрăсем хывнă: «Сана савсан» (Ю. Кудаков), «Темрен хакли» (Н. Заводскова), «Сансăр эп никама юратман», «Манаймастăп пĕрре юратсан» (Н. Праулов). Паллă произведенийĕсем: «Ваттисем ахаль каламан» (Старики не зря говорили), «Парне кунĕ» (День подарка), «Пирĕн асанне» (Наша бабушка), «Пурнăçа шеллемесĕр» (Не жалея жизни), «Уй куçлă, вăрман хăлхаллă» (Земля слухами полнится).*

## АЛĂСЕМ ПУЛАÇÇĔ ТĔРЛĔРЕН

Алăпа тăваççĕ сăпкана
Сиктермешкĕн пĕчĕк ачана.
Чи хакли, çемçи — анне алли,
Ӳстермен мана вăрçă валли.

Алăпа пулать пӳрт-çурт лартма,
Атăла пӳлсе ГЭСсем тума.
Çын вĕреннĕ алăпа çиме.
Алăпа хĕнеççĕ этеме.

Алăпа тытаççĕ кăранташ,
Вĕренет çырма пĕчĕк чăваш.
Алăпа лартатпăр йывăççем.
Алăпах тăваççĕ бомбăсем.

Ылтăн алăллă çын, чăн, çук мар,
Путсĕр алăлли те сахал мар.
Пулччăр ăслă алăллă çынсем,
Вилĕме, вăрçа чаракансем.

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Алăпа мĕнле-мĕнле ырă ĕç тăваççĕ?
2. Алăпа мĕнле усал ĕçсем тăваççĕ?
3. Ырăпа усала мĕнле уйăрмалла-ши?
4. «Ылтăн алă» тени мĕне пĕлтерет? Сирĕн ылтăн алăллă пулас килет-и?
5. Эсир алăпа мĕнле ĕçсем нумайрах тăватăр — ырă ĕçсем-и, усал ĕçсем-и?

### Пултарулăх ĕçĕ

Хăв тунă пĕр-пĕр ĕç çинчен каласа пама хатĕрленĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсен тӳр килĕвĕсене тупăр.*

1. Паян тумалли ĕçе ырана ан хăвар.
2. Ĕç çынна илем кӳрет.
3. Ĕçрен ан хăра – вăл хăй санран хăратăр.
4. Ĕçрен хăракан ырă курман.
5. Ĕç тăрантарать – кахал пăсать.

а. Труд красит человека.
б. Кто боится работы, тот не увидит добра.
в. Труд человека кормит, а лень портит.
г. Не откладывай на завтра то, что можно сделать сегодня.
д. Дело мастера боится.

## Николай Симунов
## (1937-1997)



***Николай Васильевич Симунов** – поэт, проза ăсти, «Тымар» (Корень), «Малтанхи çăлтăрсем» (Первые звёзды), «Çил мĕн тĕслĕ?» (Ветер какого цвета?) тата ытти кĕнекесен авторĕ. Паянхи пурнăç ыйтăвĕсем, тăлăх-туратсен шăпи, юлхавпа ĕçченлĕх, юратупа савăнăç – Н. Симунов произведенийĕсенче тĕп темăсем пулса тăраççĕ.*

### КĔРЕÇЕ

Пĕчĕкçеççĕ кĕреçе
Юратмасть нимле ĕçе.
Эп тытмасăр ĕçлемест,
Нимĕн те тума пĕлмест.

Пахчана йăтса тухатăп —
Йăран чавтăр ыриччен.
Сывлăш çавăрма памастăп,
Тăрăшатпăр тарличчен.

Юратать иккен ĕçе
Манăн пĕчĕк кĕреçе.
Шав чаватпăр, шав чаватпăр,
Ывăнсан ларса канатпăр.



## Словарь ĕçĕ

**шав** — постоянно
**ыриччен** — до усталости

## Илемлӗ вулама хӑнӑхатпӑр

Сӑввӑн партитурине тӑвӑр, палӑртуллӑ вуласа парӑр.

## ЫЈйтусемпе ӗҫсем:

1. Кӗреҫе сӑвӑри сӑнарсӑр мӗн те пулин тума пӗлет-и?
2. Сӑнар кӗреҫене мӗн тутарттарать?
3. Кӗреҫе ӗҫе юратать-и?
4. Кӗреҫепе мӗн-мӗн тӑваҫҫӗ?
5. Эс кӗреҫепе мӗнле ӗҫ тума пултаратӑн?

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

Кӗреҫесӗр пуҫне тата мӗнле ӗҫ хатӗрӗсене пӗлетӗр? Каласа тухӑр.

## Халӑх ӑс-хакӑлӗ

*Пӑнчӑсем вырӑнне кирлӗ сӑмахсем лартса ваттисен сӑмахӗсене вулӑр.*

1. Ӗҫрен хӑракан … курман. а) илем
2. Ӗҫ ҫынна … кӳрет. ӑ) санран
3. Ӗҫрен ан хӑра — вӑл хӑй … хӑратӑр. б) ыр
4. Алӑра … пултӑр, пуҫра ӑс пултӑр. в) ӗҫ



**Виталий Енӗш**
**(1941)**

***Виталий Енӗш (Виталий Григорьевич Григорьев)*** *— ҫыравҫӑ, сӑвӑҫ, куҫаруҫӑ. Вӑл пӗтӗмпе 19 кӗнеке пичетлесе кӑларнӑ. Ун кӗнекисенчен хӑшӗ-пӗри вырӑсла, украинла, пушкӑртла кун ҫути курнӑ, уйрӑм сӑвви-калавӗсем вуншар халӑх чӗлхипе пичетленнӗ. Юлашки ҫулсенче ҫыравҫӑ ытларах куҫару ӗҫӗпе ӗҫлет. Вӑл нумай халӑх ҫыравҫисен хайлавӗсене чӑвашла куҫарнӑ.*

### ЧИ МАТТУРРИ — УРИНЕ

*Калав*

Пирӗн кӳршӗри Ҫеменсем анкартинче ҫӗр улми кӑлараҫҫӗ. Ҫемйипех тапса тухнӑ ӗҫе. Ачасем те — Павӑлпа Микиш, Уринепе Сашук — пысӑккисемпе пӗрле тӑрмашаҫҫӗ. Ҫитӗнсе ҫитнисем кӑлараҫҫӗ, пӗчӗккисем пухаҫҫӗ. Пуринчен те кӗҫӗн Урине уйрӑмах ларма-тӑма пӗлмесӗр тӑрмашать.

Ҫӗр улми кӑларасси — сивӗ кӗркуннере те питӗ хӗру ӗҫ.

Пӗр кана ӗҫлесен, Павӑл Микишпе Сашука хӑй патне чӗнсе илчӗ:

— Эсĕ, Микиш, хăвăн сылтăм аллупа пĕр харăсах миçе çĕр улми тытма пултаратăн? — ыйтрĕ вăл. — Эпĕ ав ывăça вицĕ çĕр улми кĕртме пултартăм!

— Вĕттисене пухсан çирĕм те кĕртме пулĕ, — хуравларĕ Микиш. Хăй çавăнтах сылтăм аллипе вĕтĕ çĕр улмисем пухма тытăнчĕ.

Сашук та унран юлмарĕ.

Ак вуннă, — пĕлтерчĕ вăл тепĕртакран.

— Ман вун пĕр, — хушса хучĕ Микиш.

Арçын ачасем хушшинче мăйăр мăнăш çимĕç пухассипе ăмăрту хĕрнĕçемĕн хĕрсе пычĕ, пурте вĕтĕрех те вĕтĕрех çĕр улмисем шырама тытăнчĕç.

— Ман ывăça вун пилĕк çĕр улми кĕчĕ! — терĕ савăнăçлăн Павăл.

— Манне те вун пилĕк.

— Мĕн тăватăр çак эсир? — ыйтрĕ ачасенчен амăшĕ.

— Хăшĕн алли пысăкраххине пĕлес тетпĕр-ха, — терĕ Павăл.

— Хăшĕн пысăкрах вара?

— Манăн! — пуçне каçăртрĕ Павăл. — Эпĕ юлашкинчен вун çичĕ çĕр улми пухса илтĕм.

— Урине сирĕнпе ăмăртмарĕ, — терĕ амăшĕ. — Анчах та унăн алли сирĕннинчен чылай пысăккнине, Урине сирĕнтен пуринчен те маттуррине эпĕ аякранах асăрхарăм.

— Хăрах аллине вăл, пукане пекскер, виç-тăватă çĕр улми те кĕртеймест-иç, анне, — хирĕçлеççĕ арçын ачасем харăссăн.

— Мĕнлерех кăна кĕртет-ха. Эсир çапла айланнă хушăра вăл çичĕ витре çĕр улми пухса хучĕ. Вăт мĕн пек пысăк унăн алли, вăт еплерех маттур ман пĕчĕк Урине!

Арçын ачасем палăрмаллах хĕрелсе ĕçе пикенчĕç.

## Словарь ĕçĕ

**тăрмаш** — возиться
**вĕтĕ** — мелкий
**ăмăрту** — соревнование
**айлан** — копошиться

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Кĕршĕри Çеменсен анкартине çĕр улми кăларма камсем тухнă? Каласа тухăр.
2. Пĕр кана ĕçленĕ хыççăн Павăл Микишпе Сашука хăй патне мĕн тума чĕнсе илчĕ?
3. Ачасем мĕн тума пуçларĕç?
4. Павăлăн, Микишăн, Сашукăн ывăçĕсене миçешер çĕр улми кĕнĕ?
5. Амăшĕ мĕншĕн Уринен алли пысăкрах тенĕ?

## Пултарулăх ĕçĕ

Çĕр улми çинчен интернетра 5 интереслĕ факт тупăр. Сирĕн пахчара е садра çĕр улмин хăш сорчĕсене лартаççĕ? Аçу-аннӳрен ыйтса пĕлĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр:*

1. Паянхи ĕçе …
2. Ĕçрен ан хăра – …
3. Çиччĕ виç те …
4. Виççĕри ывăл ача ашшĕне пулăштăр, …

а) вăл хăй санран хăратăр.
ă) ырана ан хăвар.
б) виççĕри хĕр ача амăшне пулăштăр.
в) пĕрре кас.

## ПАХЧАÇĂПА ЫВĂЛĔСЕМ

*Чăваш халăх юмахĕ*

Тахçан пĕр ăслă пахчаçă пурăннă. Унăн çичĕ ывăл пулнă. Хăй вилсен ачисем ĕçлеме пăрахасран хăранă пахчаçă.

Вилес умĕн ашшĕ ывăлĕсене чĕннĕ те çапла каланă:

— Ачасем, пур пек пурлăха эпĕ сире валли хăваратăп. Эсир ăна улма пахчинче шырăр. Пурте пĕрле шырасан çеç тупма пултаратăр.

Ачисем ашшĕ пахчана укçа пытарса хунă пулĕ тесе шухăшланă. Ашшĕ вилсен вĕсем пахчана пĕтĕмпех чавса тухнă. Чавмасăр пĕр вырăн та хăварман.

Чавнă хыççăн çĕр лайăх çемçелнĕ. Улмуççи тымарĕсем патне сывлăш ирĕккĕн пыракан пулнă. Улмуççисем улма тулăх тума тытăннă. Пахчари ытти çимĕçсем те ăнса пулнă. Пурнăç та ерипен юсанса кайнă.

Çичĕ ывăл ашшĕ халалласа хăварнă мула тупнă. Ку мул — тăрăшса ĕçлени.

## Словарь ĕçĕ

**чав** — копать
**халалла** — завещать
**тымарсем** — корни

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Пахчаçăн миçе ывăл пулнă?
2. Пахчаçă мĕншĕн куляннă?
3. Вилес умĕн вăл ывăлĕсене мĕн каласа хăварнă?
4. Çичĕ ывăл мĕнле мул тупнă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

Ĕç çинчен калакан мĕнле ваттисен сăмахĕсене пĕлетĕр? Тупса çырса илĕр.

## Пултарулăх ĕçĕ

Калав тăрăх сценка йĕркелĕр, выляса кăтартăр.

# ÇУРХИ КУН – КАПĂР —
# МАТУШКА ВЕСНА ВСЕМ КРАСНА

**Константин Иванов**
**(1890-1915)**



***Константин Васильевич Иванов*** *– чăваш поэзийĕн классикĕ. Унăн чи паллă произведенийĕ - «Нарспи» поэма. Ку поэмăна тĕрлĕ халăх чĕлхине куçарнă. Поэт И.Я. Яковлев вĕренекенĕ пулнă, чăвашсен тĕрлĕ халап-юмахĕсене пухнă, вĕсене сăвăласа илемлĕ литература тексчĕсем хайланă. Çыравçăн паллăрах произведенийĕсем: «Тăлăх арăм» (Вдова), «Икĕ хĕр» (Две дочери) балладăсем, «Шуйттан чури» (Раб дьявола) трагеди, «Пăртта йăхĕ» (Потомки Прты) хроника сыпăкĕсем. Çавăн пекех М. Лермонтовăн, А. Кольцовăн, Н.Некрасовăн, Н. Огаревăн сăввисене чăвашла куçарнă.*

## СИЛПИ ЯЛĔНЧЕ
*Поэма сыпăкĕ*

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел сават тĕнчене
Хĕл ыйхинчен вăратса.

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
Ешĕл тумтир тăхăнать,
Çеçен хир те ешерет,
Илемĕпе мухтанать.

Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
Ырă шăрши сарăлать,
Пур çĕрте те кайăксен
Лайăх юрри янăрать.

Çӳлте, пĕлĕт айĕнче,
Тăри юрри илтĕнет,
Çемçе курăк çийĕнче
Путек-сурăх сиккелет.

Хăй кĕтĕвĕ патĕнче
Ача шăхличĕ калать,
Хырăмĕ пит выçнипе
Силпи ялнелле пăхать.

### ЫЙтусемпе ĕçсем:

1. Çуркунне хĕвел мĕнле пăхать?
2. Юр малтан ăçта ирĕлме пуçлать?
3. Пӳрт тăрринчен мĕн юхать?
4. Кăнтăртан хăш кайăксем малтан вĕçсе килеççĕ?
5. Çынсем çуркунне юр кайса пĕтиччен мĕнле тумланаççĕ?

### Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Поэма сыпăкĕн партитурине тăвăр. Çуркуннен çут çанталăкри пĕлтерĕшне, савăнăçне автор каланă шухăшпа килĕшсе, тĕрĕс вуласа пама тăрăшăр. Пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

К.В. Иванов лексикине пуплеве кĕртсе çуркуннене сăмах вĕççĕн «ўкерсе» парăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

1. Енчен те эсир художник пулас пулсан, çак сăвăн сюжетне мĕнле ўкерчĕкпе кăтартса панă пулăттăр? Каласа парăр.
2. Николай Овчинниковăн «Çуркунне вăранни» картинипе усă курса текст çырăр.
3. «Çуркунне» сăмахпа синквейн тăвăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Панă сăмахсенчен ваттисен сăмахĕ пуçтарăр, вырăсла куçарăр.*

Çуркунне, кĕркунне, кирлĕ, кирлĕ, тир, пир.



*Николай Овчинников «Çуркунне вăранни»*

# ТĂВАН ÇĔР-ШЫВРАН ХАКЛИ ÇУК —
# НЕТ В МИРЕ КРАШЕ РОДИНЫ НАШЕЙ

**Илле Тукташ**
**(1907-1957)**



***Илле Семенович Тукташ*** *чăвашсен паллă сăвăçи, Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕн авторĕ. Ытларах лирика жанрĕнче вăй хунă. Унан паллă произведенийĕсем: «Шур кăвакарчăн» («Белый голубь»), «Ӳс, çĕр-шыв, хăватлан» («Расти, страна, окрепни»), «Тăван çĕр-шыв» («Родная страна»). И. Тукташ пултарулăхĕнче Тăван çĕр-шыв, юратнă улăх-çерем, атте-анне килĕ – тĕп темăсем пулса тăраççĕ. Çавăн пекех Илле Тукташ калавсем, повеçсем çырнă, чăваш фольклорне пухнă, вырăс классикĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарнă.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Патшалăх символĕсем шутне мĕн-мĕн кĕрет?
2. Чăваш Республикин символĕсене хăçан çирĕплетнĕ?
3. Герб тата ялав çинче миçе тĕп тĕс? Вĕсем мĕне пĕлтереççĕ?
4. Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕ тесе мĕнле юрра çирĕплетнĕ?
5. Унăн авторĕсем камсем?

### ТĂВАН ÇĔР–ШЫВ

*Кĕвви Г. Лебедевăн* *Сăвви И. Тукташăн*

Çурхи тĕнче вăраннă чух:
Хаваслă кун шăраннă чух,
Чун савăнать, чĕре сикет,
Çĕршывăм çинчен юрлас килет.

*Хушса юрламалли:*

Тăван çĕршыв, Тăван çĕршыв,
Асран кайми юратнă çĕршыв.
Тăван çĕршыв, Тăван çĕршыв,
Мухтав сана, çуралнă çĕршыв!

Яшсем-хĕрсем вылянă чух,
Атте-анне ăс панă чух,
Чун савăнать, чĕре сикет,

Татах та нумай пурнас килет.

*Хушса юрламалли.*

Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух,
Чăваш тĕнчи çĕкленнĕ чух,
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та хастар пулас килет.

*Хушса юрламалли.*

## РОДИНА

*Русский текст А. Дмитриева*

Когда весны широкий свод
Лучи живые щедро льёт, -
На добрый лад судьбу верша,
О крае родном поёт душа.

*Припев:*

Поклон тебе,
О Родина,
Красавица
На все времена.
Поклон тебе,
О Родина,
Да славится
Родная страна!

Отца на смену выйдя в путь,
Ты, юность, им опорой будь.
На добрый лад судьбу верша,
О жизни большой поёт душа.

*Припев.*

Народ народу — друг и брат,
Отныне и чуваш крылат,
На добрый лад судьбу верша,
О силе людской поёт душа.

*Припев.*

**Гимн** — торжественная песня, принятая как символ государственного или классового единства.

**Гимн** (*мухтав сăмахĕ*) — турăсене, паттăрсене, çĕр-шыва, ĕçсемпе пулăмсене мухтаса каланă сăвă-юрă.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

Гимн миçе куплетлă? Кашни куплечĕ мĕн çинчен?

## Итлев-тăнлав

Чăваш Республикин гимне итлĕр. Пăхмасăр калама, юрлама вĕренĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Гимнăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр.*

1. Ĕç тăрантарать — кахал пăсать.
2. Ăçта кăна ан çит, Тăван çĕр-шыва асра тыт.
3. Çут çанталăк — пирĕн тăван кил.
4. Ăс-тăна мĕн виличчен пухас пулать.
5. Пысăккине хапсăнакан пĕчĕккине çухатнă.
6. Çамрăкла вĕренни — чул çинче, ватăлла вĕренни — юр çинче.

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Раççей гимнĕн авторĕсенчен пĕри — Сергей Михалков. Геннадий Никандрович Волков, паллă этнопедагог, Сергей Михалкова Раççей гимне çак сăмахсене кĕртме сĕннĕ: «Славься предками данная мудрость народная…». Апла пулсан, Раççей гимнĕнче чăваш почеркĕ те пур. Раççей гимне итлĕр. Мари, Тутар республикисен гимнĕсене интернетра тупăр. Гимна ăçта тата хăçан илтме пулать-ши?

**Ваçлей Давыдов-Анатри**
**(1917-20101)**



***Василий Иванович Давыдов-Анатри*** *50 кĕнеке ытла пичетлесе кăларнă. Чăваш композиторĕсем унăн сăввисемпе пилĕкçĕр юрă, юрăпа ташă сюитисем, ораторисемпе кантатăсем, опера çырнă. Раççей Федерацийĕн культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Чăваш халăх поэчĕ. Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕ.*

*Поэтăн чи паллă кĕнекисем: «Пĕчĕк туссем» (Маленькие друзья), «Чеменпе Мерчен» (Чемень и Мерчень), «Илемпи» (Илемби), «Юррăмсем – çунатăмсем» (Песни мои - крылья мои) т.ыт.те.*

## Словарь ĕçĕ

**тăван кĕтес** — родной уголок
**инкек** — беда
**чыс** — совесть
**тăван** — родня

# ТĂВАН КĔТЕС

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Тăван кĕтес, сана манмарăм,
Ялан асра тытса усрарăм,
Тен, çавăнпах пуçа усмарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Атте-анне çуртне манмарăм,
Тăван чĕлхе чысне упрарăм,
Чăваш çĕрне ялан мухтарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Инкек сиксе тухсан тармарăм,
Çĕршывăма куç пек сыхларăм,
Асаттесен ятне ямарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Тăванăмсем, сире манмарăм,
Хĕрӳ ĕçре кайри пулмарăм,
Çĕршыв çинчен чунтан юрларăм.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвва мĕне халаллана? Вăл мĕнле туйăм çуратать? Сăввăн хăш йĕркисенче сăвăç тăван кĕтесе юратни сисĕнет? Палăртса тухăр.
2. Сăвăçшăн мĕн вăл — тăван кĕтес? Сирĕншĕн мĕн вăл — тăван кĕтес?
3. Эсир çак йĕркесене мĕнле ăнланатăр: *«Тăван чĕлхе чысне упрарăм», «Çĕршывăма куç пек сыхларăм», «Асаттесен ятне ямарăм».*

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмах лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр.*

1. Кашни … хăй йăвине савать.
2. Тăван йăваран … нимĕн те çук.
4. Тăван … хăй патнех туртать.
5. Ăçта кăна ан çит, … асра тыт.

# САВНĂ ЕН – ЧĂВАШ ÇĔР-ШЫВĔ — ЧУВАШИЯ – МОЯ РОДИНА

## Андриян Николаев
## (1929-2004)



***Андриян Григорьевич Николаев*** *– пĕтĕм тĕнчен виççĕмĕш космонавчĕ, авиацин генерал-майорĕ, техника наукисен кандидачĕ, икĕ хутчен Совет Союзĕн геройĕн ятне тивĕçнĕ. Андриян Николаев ячĕпе пăрахутсем, урамсемпе шкулсем, парксем хисепленсе тăраççĕ. Уйăх çинчи кратера та пирĕн ентеш ятне панă. 1962 çулхи çурла уйăхĕнче пĕрремĕш хут А.Г. Николаев «Восток-3» карап-спутникпа космоса вĕçнĕ. Вĕçев 3 талăк та 22 сехет те 22 минута тăсăлнă. Космос çинчен халăха пĕлтерме мухтавлă ентешĕмĕр тĕрлĕ кĕнеке çырнă. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем: «Уçлăхра тĕл пулатпăр» (Встретимся на орбите), «Космос – вĕçĕ-хĕррисĕр çул» (Космос - дорога без конца).*

## ТĂВАН ШУРШĂЛ

Шуршăл ялĕ таçтанах курăнать. Вăл «шурă çăл» тенинчен пулса кайнă. Пирĕн унта çăлкуç питĕ нумай. Кашнин хăйĕн ячĕ пур: пĕри — Сивĕ çăл, тепри — Çутă çăл, виççĕмĕшĕ — Сенкер çăл.

Çавал хĕррипе çырмасенче хăвалăх, шĕшкĕлĕх ÿсет. Çурхи кунсенче çĕмĕрт шурă тум тăхăнать. Кĕркунне вара пилеш сапакисем кăвар пек çунаççĕ.

Ял Атăлăн сылтăм енче ларать. Атăл çийĕн хĕвел хăпарнине курма мĕн тери илемлĕ! Пĕтĕм тавралăх ылтăн пек çиçсе тăрать, сывлама çăмăл.

Тĕнче уçлăхĕнче вĕçнĕ чухне тăван Шуршăл яланах юнашар пулчĕ. Шуршăл тесен кăмăл пушшех çĕкленчĕ. Мĕнле-ши унта анне, пиччепе шăллăм, йăмăк? Мĕнле эсир унта, тăван Шурă çăлсем? Мĕн тери юратса ĕçнĕ пулăттăм эпĕ сирĕн сивĕ шывăра!

Атте-анне килĕ çывăхĕнче шăнкăртатса юхакан шыва ним те çитмест. Çапла шухăшларăм эпĕ Çĕр тавра çаврăннă чух.

Таврăнсан сирĕн шыва нумай хутчен пырса ĕçрĕм, тăван Шуршăл çăлĕсем.

### Словарь ĕçĕ

**çăлкуç** — родник
**Çавал** — Цивиль
**сылтăм** — правый
**тĕнче уçлăхĕ** — Вселенная
**кăмăл** — настроение

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Шуршăлта кам çуралса ÿснĕ?
2. Шуршăл тени мĕне пĕлтерет?
3. Шуршăл çывăхĕнче мĕнле-мĕнле çăлкуççем пур?
4. Шуршăл ялĕ ăçта вырнаçнă?
5. Çăлкуç шывĕ сиплĕ-и?
6. Сирĕнтен кам Шуршăлти Космонавтика музейне кайса курнă?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Эсир А.Г. Николаев çырнă «Тăван Шуршăл» калава вуласа тухрăр. Калавран эсир чăваш космонавчĕн çуралнă ялĕ çинчен мĕн пĕлтĕр?
2. А.Г. Николаев тĕнче уçлăхне хăçан тата миçе хутчен вĕçнĕ?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене çыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр.*

1. Тăван çĕр-шыв – анне, ….
2. Тăван кĕтес хăй …
3. Тăван йăваран хакли …
4. Кашни кайăк …
5. Тăван çĕр-шыв ăшши …

а) нимĕн те çук.
ă) хăй йăвине савать.
б) ют çĕршыв – ама çури.
в) ĕмĕр тăршшĕ.
г) патнех туртать.

## Пултарулăх ĕçĕ

Н.Овчинниковăн «Салам, Çĕр!» картинине пăхса тухăр, ун тăрăх калаçу ирттерĕр.



*Николай Овчинников «Салам, Çĕр!»*

# СЫВЛĂХА ПĔТЕРМЕ ÇĂМĂЛ, ТАВĂРМА ЙЫВĂР — ПОТЕРЯТЬ ЗДОРОВЬЕ ЛЕГЧЕ, ЧЕМ СОХРАНИТЬ

**Вениамин Тимаков**

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Эсир В.П. Тимаковăн хăш хайлавне вуланă?
2. Çыравçăн паллăрах кĕнекисене калăр?
3. В.Тимаков куçару ĕçĕнче тăрăшнă-и?

## СЫВЛĂХПА ЧИР

*Поэма сыпăкĕ*

Ял-хула урамĕнче
Пысăк, йывăр михĕпе
Пĕр мĕлке çӳрет утса,
Тимлĕн вичкĕннĕн пăхса,

«Парнесем» сĕнет пире,
Миххинчен тупса вăр-вар.
Тусăмсем, калам тӳрех:
Çак мĕлке – Хĕл мучи мар.

Ун ятне тинех эпир
Тавçăрса илетпĕр: Чир…
Çĕклемри «кучченеçне»
Халь чухлатпăр мĕнлине.

«Ытларах салатмалла
Манăн хам «парнесене»,
Вырăнпах вырттармалла
Шăлçемми-ачасене», —

Терĕ Чир хăпартланса,
Çынсене усал сунса.
Асăрхарĕ Ивана:
Терт кӳме пулать ăна.

Яланах вăл пӳлĕмре —
Пушă чух, канмалли кун,
Шăнасран хăрать сĕре.
Шуранка сăн-пичĕ ун.

Телевизор умĕнчен
Çурçĕрччен те уйрăлмасть,
Хулăн свитер ăшĕнче
Тарласан та тапранмасть.

Ирхине вăл лĕп шывпа
Йĕпетет питне кăна.
Эс нихçан та майкăпа
Асăрхаймăн Ивана.

Сивĕре вăхăтлăха
Урама вăл тухрĕ çеç.
Чир ăна вун кунлăха
Парнелерĕ «кучченеç».

Тусăмсем, эсир куратăр
Урамра татах мĕлке.
Улăп пек ăна туятăр.
Сăнĕ ырă та ĕлккен.

Кашниех туять хастарлăх,
Чăн телей унпа чухне.
Юратать ăна пур халăх,
Туртăнать ун çывăхне.

Вăл камне пĕлетĕр: Сывлăх!
Пархатарлă, вăйлă ят.
Вăл калать: «Чир-чĕр, ан çулăх,
Çын манпа инçе каять.

Ан çухалтăр пушă вăхăт
Пĕр этемĕн те ахаль.
Спорт тумне, юлташăм, тăхăн,
Кахалра пайти сахал.

Тăрă шыв та, вут-хĕвел те,
Уçă сывлăш та ялан
Çыннăн вăй-халне çĕклетĕр,
Çав çынпа эп тус пулам.

Йĕлтĕртен те, тăркăчран та
Çын ан пистĕр пурнăçра.
Вăй-хăват килмест-çке янтă,
Çук вăл лăпкă канăçра.

Ĕмерне манран ан юлăр,
Пĕчĕкрен, мĕн ачаран.
Çирĕп те хăюллă пулăр,
Сăнăр çиçтĕр кăмăлран».

Çакăн пек каларĕ Сывлăх
Ваттине те вĕттине.
Пулĕ вăй, телей те ырлăх,
Ĕлкĕрсен ун уттине.

## Словарь ĕçĕ

**Чир** — болезнь
**Ĕлккен** — красивый, раскошный
**Вичкĕн** — пронзительно
**Мĕлке** — тень
**Тăркăч** — коньки

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Поэма сыпăкне икĕ пая пайласа тепĕр хут тимлĕ вуласа тухăр. Пĕрремĕш пайĕ мĕн çинчен? Иккĕмĕш пайĕ мĕн çинчен пулчĕ?
2. Чир çынсене усал сунса мĕнле парне валеçсе парасшăн?
3. Иван мĕн тума юратать? Мĕн тума юратмасть? Каласа тухăр.
4. Сывлăх мĕн пек? (Сывлăха мĕнпе танлаштарнă?) Унăн сăнĕ мĕнле?
5. Сывлăхлă пулас тесен çыннăн мĕн-мĕн тумалла? Каласа тухăр.
6. *«Чир ăна вун кунлăха*
*Парнелерĕ «кучченеç»,* — тенине мĕнле ăнланатăр? Ивана Чир мĕнле «кучченеç» парнелет-ши? Мĕншĕн?

**Тема** – это то, о чем рассказывается в произведении. **Идея** художественного произведения – его главная мысль о том основном круге явлений, которые изображены в этом произведении.
**Тема** – хайлавра мĕн çинчен каласа кăтартни. **Идея** – хайлавăн тĕп шухăшĕ.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Ку хайлав мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.
2. Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн сывлăхпа кашниех хăйне телейлĕ туять?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмах лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр.*

1. Сывă çын — … çын.

2. Сывлăха … илеймĕн.
3. Сывлăхран хакли … çук.
4. Сывлăх пулсан … пулать.

*Кирлĕ сăмахсем*: укçалла, пурте, çунатлă, нимĕн те.

## ВĔРЕННИНЕ ПĔТĔМЛЕТНИ

1. *Панă ваттисен сăмахĕсене ушкăнлăр: «вĕренӳ», «çăкăр», «туслăх», «Тăван çĕр-шыв», «ĕç».*

- Тăван йăваран хакли нимĕн те çук.
- Туссăр çын тымарсăр йывăç пек.
- Паян тумалли ĕçе ырана ан хăвар.
- Çăкăр хырăм хыççăн çӳремест.
- Кайăк хитре тĕкĕпе, этем ырă ăсĕпе.
- Çынпа çын туслă пултăр, халăхпа халăх туслă пултăр.
- Кашни кайăк хăй йăвине савать.
- Килекен çынна çăкăр лартма хушнă.
- Ача чух вĕренни ĕмĕрлĕх.
- Ĕç çынна илем кӳрет.
- Çăкăр-тăвар хире-хирĕç.
- Кайăк çуначĕсемпе вăйлă, çын — туслăхпа.

2. *Çыравçăсен портречĕсемпе вĕсен ячĕсен тӳр килĕвне тупăр.*












**И.Я. Яковлев, К.В. Иванов, И.С. Тукташ, П.П. Хусанкай, Г.Н. Волков**

3. *Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.*

1) Пĕр вăтă çыннăн (а)________ шкула çӳренĕ. Çур çул та иртмен (ă)_________ вĕреннĕ ку. Вара хăйĕн (б)________ тĕрлĕ кĕнекесем вуласа панă.

Аслашшĕн (в)_________ те вулама вĕренесси килсе кайнă. Мăнукĕ ăна кунсерен (г)________ кăтартнă. Аслашшĕ хăшĕ-пĕрисене астунă, чылайăшне çавăнтах (д)________ кайнă е пĕр-пĕринпе пăтраштарма пуçланă.

*(Г.Н. Волков «Çамрăкла вĕренни — чул çинче» притча сыпăкĕ)*

*<u>Суйламалли вариантсем</u>:*

а) ывăлĕ, мăнукĕ, пиччĕшĕ, юлташĕ, хĕрĕ.
ă) вулама, çырма, ӳкерме, ташлама, калаçма.
б) ашшĕне, амăшне, шăллĕне, аппăшне, аслашшĕне.
в) манăн, унăн, хăйĕн, çакăн, санăн.
г) сас паллисем, кĕнекесем, ӳкерчĕксем, япаласем, журналсем.
д) ас туса, ӳкерсе, шутласа, манса, выляса.

2) Тахҫан пӗр ӑслӑ (а)_______ пурӑннӑ. Унӑн ҫичӗ (ӑ)_______ пулнӑ. Хӑй вилсен ачисем (б)_______ пӑрахасран хӑранӑ пахчаҫӑ.

Вилес умӗн (в)_______ ывӑлӗсене чӗннӗ те ҫапла каланӑ:

— Ачасем, пур пек (г)_______ эпӗ сире валли хӑваратӑп. Эсир ӑна улма (д)_______ шырӑр. Пурте пӗрле (е)_______ ҫеҫ тупма пултаратӑр.

*(«Пахчаҫӑпа ывӑлӗсем» чӑваш халӑх юмахӗнчи сыпӑк)*

*<u>Суйламалли вариантсем</u>:*

а) атӑҫӑ, сутуҫӑ, пахчаҫӑ, арманҫӑ, пулӑҫӑ.

ӑ) ача, юлташ, каччӑ, ывӑл, ҫын.

б) ӗҫлеме, юрлама, ташлама, калаҫма, вулама.

в) амӑшӗ, йӑмӑкӗ, кукашшӗ, ашшӗ, вӗрентекенӗ.

г) пурлӑха, укҫана, ылтӑна, улмана, сумкӑна.

д) ураменче, хулинче, пахчинче, ялӗнче, посёлокӗнче.

е) тупсан, пытарсан, шырасан, илсен, ӳкерсен.

4. *Ҫак йӗркесен авторӗсем камсем?*

1) Килчӗ ырӑ ҫуркунне,
Килчӗ, ячӗ ӑшӑтса.
Хӗвел сават тӗнчене
Хӗл ыйхинчен вӑратса.

2) Тӑвансемпе пӗрлешнӗ чух,
Чӑваш тӗнчи ҫӗкленнӗ чух,
Чун савӑнать, чӗре сикет,
Татах та хастар пулас килет.

3) Юр ҫӑвать, пӗрремӗш юр…
Юр ҫӑвать, тухса эс кур…
Ут эс тӳрӗ урампа,
Юр пӗрчи вылять санпа…

4) Алӑ ҫумасӑр
Ҫӑкӑр ан тыт:
Ҫӑкӑртан таси ҫук.

*Вариантсем:* **П. Эйзин, К. Иванов, Н. Сандров, И. Тукташ.**

5. *Сӑвва вуласа тухӑр. Танлаштарусем (сравнения) тупӑр.*

Пичӗ-куҫӗ пит хӳхӗм,
Хирти сарӑ чечек пек.
Икӗ куҫӗ хуп-хура,
Икӗ хура шӑрҫа пек. *(К. Иванов)*

**ТУПМАЛЛИ**
**СОДЕРЖАНИЕ**

Халăх сăмахлăхĕ — Устное народное творчество …………………….
Пĕлĕве сутăн илеймĕн — Знание за деньги не купишь ………………..
Кĕрхи çанталăкăн кăмăлĕ хуçăк — Осень – погоды перемен восемь …
Усал ĕçпе ырă ят илеймĕн — Без добрых дел не будет и доброго имени...
Хĕл сивви ватă çынна та çамрăклатать — В зимний холод всякий молод
Çут çанталăк – пирĕн тăван кил — Природа – наш дом ……………….
Çăкăртан асли çук — Хлеб – всему голова ………………………………..
Ĕç çынна илем кӳрет — Труд красит человека …………………………….
Çурхи кун – капăр — Матушка весна всем красна ………………………
Тăван çĕр-шывран хакли çук — Нет в мире краше Родины нашей ……...
Савнă ен – Чăваш çĕр-шывĕ — Чувашия – моя родина …………………..
Сывлăха пĕтерме çăмăл, таварма йывăр — Потерять здоровье легче, чем сохранить ……………………………………………………………………….
Вĕреннине пĕтĕмлетни ……………………………………………………